1938 МАРТ 21 ТУНТИКУН
65 (4878)-мĕш №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат̆ ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Парти вĕрентĕвĕн пахалăхне татăклăн лайăхлатмала

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн 1937 çулхи февраљ-март уйăхĕнче пулнă Пленумĕ бољшевиксăма вĕренсе алла илесси çинчен кĕрешӳлĕ лозунг кăларса тăратрĕ. Çав задачăна пурнăçа кĕртме парторганизацисен чи малтан парти вĕрентĕвĕн ĕçне пит тимлĕн туса пымала.

Анчах, тӳрех калас пулат̆, чылай парторганизацисем Тĕп Комитетăн çак кăтартуне пурнăçа кĕртессишĕн бољшевикла кĕрешмесçĕ-ха. Республикăра партилĕ вĕрентӳ ĕçĕ, уйрăмах вĕрентӳ пахалăхĕ тĕлĕшпе, айалти вырăнта тăрат̆. Республикĕпе илсен парти вĕрентӳне пурĕ 3.800 коммуниста йахăн хутшăннă. Анчах парти вĕренӳне хутшăнман коммуниссем те пур, ун пеккисем 500 çынна йахăн шутланаççĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ пĕччен коммуниссем. Сăмахран, Тутаркас районĕнчи коммуниссенчен 20 процент таран нимĕнле формăпа та политикăна вĕренмеççĕ.

Парткабинетсен пуçлăхĕсемпе штатлă пропагандиссен çак март уйăхĕн 17—19-мĕшĕ кунĕсенче пулса иртнĕ канашлăвĕнче партилĕ пропагандă ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пурри курăнчĕ: чылай шкулсемпе кружоксенче вĕренме коммуниссен пĕлӳвĕ мĕнлипе пăхмасăрах илнĕ; кружоксен зањатийĕсем нумай чухне пулмасăр йулаççĕ, вăл уйрăмах Пăрачкав районĕнче çавăн пек; кружок членĕсем зањатисене йапăх çӳреççĕ, ак, сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнче нумай кружоксенче вĕренекенсенчен зањатисене 50—60 процент таран çеç çӳреççĕ, районĕпе илсен—70 процентран ытла мар çӳреççĕ; тата чи пысăк çитменлĕх вăл вĕренӳ пахалăхĕ айалта тăни пулат̆: нумай коммуниссем, час-часах пропагандиссем хăйсем те зањатисене çителĕклĕ хатĕрленмесĕр йе пĕртте хатĕрленмесĕрех пыраççĕ; зањатисене ыйту-ответ формипе ирттереççĕ.

Парти райкомĕсем кашни кружокпа, кашни вĕренекенпе, кашни пропагандиспа уйрăммăн тата кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, çавăнпа пĕр тĕрлĕ çитменлĕхсемех çултан çулах тăсăлса пыраççĕ.

Партилĕ пропагандă ĕçĕнчи идейăлă-политикăлă содержанипе ӳстересси, пурте пĕлеççĕ, пропагандисран килет. Çавăнпа партилĕ пропагандă ĕçне лайăхлатма пропагандиссемпе ĕçленинчен пуçарса йамала. Пропагандиссем пулса ĕçлеме пирĕн парторганизацисенчи активăн чи лайăх пайне уйăрмала. Чи малтан, парти райкомĕсен секретарĕсен хăйсен пропагандиссем пулса ĕçлемеле, вĕсем йертсе пыракан кружоксем кăтартулă ĕçлекен кружоксем пулса тăмала. Анчах хаљхи вăхăтра республикăра парти райкомĕсен секретарĕсем 35 çын çеç пропагандă ĕçне туса пыраççĕ-ха.

Парти комитечĕсен штатлă тата штатра тăман пропагандиссен кадăрĕсене хаклă хурас пулат̆. Пропагандиссем час-часах улшăнса тăни пулмала мар. Вĕсен пропагандиссен идейăлă-политикăлă çулĕшне хăпартса пырас тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлесе пымала.

Пропсеминарсем пропагандиссен вĕренмели тĕп формă пулса тăмала. Пропсеминарсене райкомсен секретарĕсем хăйсем йертсе пыни кирлĕ. Анчах Сĕнтĕрвăрри районĕнче райком секретарĕсем çав ĕçрен пăрăннă, унта пропсеминарсене пропагандиссем хăйсем черетпе йертсе пыраççĕ. Паллах ĕнтĕ, райкомăн çак çитменлĕхе халех пĕтерес пулат̆.

Пропсеминарсем нумай çĕрте пропагандиссене теори йенпе тата методикă йенпе пулăшу памали пулса тăман-ха. Вĕсен ĕçне кружок руководителĕсен пĕлӳне кура организацилес пулат̆. ССР Сойузĕнчи халăхсен историне вĕренме, пĕтĕм тĕнчери лару-тăру тата шалти лару-тăру ыйтăвĕсемпе паллашма, партилĕ пропагандăпа агитаци методикине вĕренме пропагандиссен семинарĕсене ирттермеле. Парти вĕрентĕвĕн кружокĕсен ĕç опычĕпе, пропагандиссен ĕç опычĕпе пĕр-пĕринпе паллаштарма пропагандиссен канашлăвĕсене тăтăшах туса ирттермеле.

Парти вĕрентĕвĕн Шупашкарти Тĕп Çуртĕн пропагандиссемпе агитаторсене теорилĕ ыйтусем тĕлĕшпе пулăшса пымала, анчах халĕ вăл çав ĕçе йапăх туса пырат̆-ха. Парткабинетсен ĕçĕ пирки те ыйту пит çивĕччĕн тухса тăрат̆, мĕншĕн тесен халĕ ĕнтĕ пирĕн çĕнĕ пропагандиссемпе агитаторсем нумай. Парткабинетсен пропагандиссене ваљљи те, вĕренекенсене ваљљи те консуљтацисем организацилемеле, вĕренекенсене кирлĕ литературăпа, пăхса вĕренмелисене тупса памала, радио тăрăх паракан лекцисене итлессине йĕркелемеле; районри парти активĕ ваљљи лекцисемпе докладсем тумала, пропагандиссемпе семинарсем ирттермеле.

Пропсеминар руководителĕн лекци йе доклад тунипе йе тата семинарта пĕр-пĕр ыйтăва сӳтсе-йавассипе организацилениипе чарăнмала мар, унăн пропагандис çитес зањатийе ирттерме мĕнле хатĕрленнине пит тĕплĕн тĕрĕслемеле, пропагандисăн конспекчĕсене, тезисĕсене зањати планĕсене, илљӳстраци материалĕсене пăхса тухмала, пропагандис хăй темăна мĕн чухлĕ ăнланнине тĕрĕслесе тухмала. Пропагандис зањати ирттерме хатĕрленмен пулсан, райкомăн ăна хатĕрлениччен зањати ирттерме чармала. Ĕçе çакăн пек йĕркелесен, пропагандиссем зањатисене ирттерме лайăхрах хатĕрленме пуçлĕç.

Пропагандис кружокри вĕренӳ пахалăхĕшĕн райком умĕнче йе хула комитечĕ умĕнче ответ тытат̆, çавăнпа унăн вĕренекенсенчен, вĕреннĕ ыйтусене вĕсем лайăх ăнланса пычĕр тесе, хытă ыйтмала. Кашни вĕренекенĕн зањатине темă тăрăх кăтартса панă литературăна тĕплĕн вуласа пыма хушмала. Кӳлленхи ĕç нумай тесе зањатисене пымасăр йулни йе йапăх хатĕрленсе пыни пулмала мар.

Вĕренекенсен кашниннех зањатине вĕреннĕ материала конспектласа çырса пымала. Мĕн вĕреннине çырса пымасан, тĕплĕн вĕренни пулма та пултараймаст̆. Çак ĕçпе парткабинетсен те интересленмеле. Шкулсемпе кружоксенче ыйту-ответ „методне", пропагандис ыйту парса пынă çĕмĕн вĕренекенсем „çапла" йе „çук" тесе çеç ответсем парса пырас йĕркене пĕтерсе хурас пулат̆. Партилĕ вĕренӳри тĕп метод, тĕрĕс метод вăл—сарлакан та чĕррĕн калаçу ирттерни пулса тăрат̆.

Пропагандисăн йалан ах çакна асра тытмала: пропагандисла ĕçре марксисла-ленинла теорийе пăсни, пăсса ăнлантарни ан пултăр. В. И. Ленин: „лекцисен идейăлă-политикăлă направленийĕ пĕтĕмпех тата пур йенчен те лекторсен составĕнчен килет", тесе кăтартса панине асра тытас пулат̆. Вăл ĕнтĕ пирĕн пропагандиссем Ленин—Сталин партийĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çынсем, марксисла-ленинла теори тасалăхĕшĕн хăватлăн кĕрешекенсем пулмалине пĕлтерет.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен парти вĕрентĕвĕн ĕçĕсем тĕлĕшпе татăклăн та оперативлă ĕçлесе пымала. Партилĕ вĕрентӳ ыйтăвĕсене сӳтсе-йавмасăр райкомсемпе хула комитечĕсен пĕр ларăвĕ те пулмала мар. Парти комитечĕсен хăш те пĕр кружок мĕнле ĕçлесе пынине пĕлнипех те лăпланмала мар, вĕсен кашни коммунис мĕнле вĕренсе пынине пĕлсе тăмала, кашни коммуниса уйрăммăн хăйĕн идейăлă-политикăлă пĕлӳне хăпартма пулăшса пымала.

Шкулсемпе кружоксенче вĕренме вĕренекенсен пĕлӳлĕхĕ пĕр пеккреххине асăрхаса илмеле. Çавăн пек тумалли йĕркене пăснă парторганизацисенче, вăл йăнăша халех тӳрлетмеле.

Парти Обкомĕн парти пропагандипе агитаци тата пичет пайĕн те парти райкомĕсемпе хула комитетне парти вĕрентӳ ĕçне лайăхлатма вырăна тухса ĕçе тĕрĕслесе конкретлă, оперативлă руководствă парса ытларах пулăшмала.

Чăваш республикĕнчи парторганизаци марксисла-ленинла теорипе çирĕп хĕçпăшалланса, хăйĕн авангардлă рољне тата çӳлерех çĕклĕ, бољшевикла сыхăлăха ӳстерсе пырса партин тăшманĕсене пурне те—ылханлă троцкиссемпе бухаринцăсене, буржуалă националиссене тата ытти фашисла бандитсене те вĕçне çитийех тĕп туса хурĕ.

Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Мартăн 17-мĕшĕнче йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ М. М. **Литвинов** йулташ хăшпĕр йутçĕршыв журналисĕсем ыйтнипе йутçĕршывсенчи пичетĕн Мускаври представителĕсене, çавăн пекех тата совет пичечĕн представителĕсене йышăннă. Вăл вĕсене Йевропăра агреççин çĕнĕ акчĕсене май пулса тăнă пĕтĕм тĕнчери лару-тăру тĕлĕшпе ССР Сойуз правителстви мĕнле пăхни çинчен каласа панă.

Сăмах пуçласа йанă чухне Литвинов йулташ çапла каланă: вăл пичет представителĕсене мĕнле те пулин çĕнĕ тата сенсацилĕ йапаласем çинчен каласа пама шухăшламаст̆, мĕншĕн тесен совет правителствин тулти политики лайăххăнах паллă тата вăл улшăнман, совет правителстви пĕтĕм совет халăхĕ çавăншăн тăракан хăйĕн мирлĕ политикине улăштарма нимĕнле сăлтавсем те çук тесе шутлат̆,—тенĕ. Анчах епĕр пурăнакан хаљхи вăхăтра,—каланă малала Литвинов йулташ,—политикăн çирĕплĕхĕпе улшăнманлăхне кăтартса калани Йевропăри условисенче сенсаци пулса тăрат̆, мĕншĕн тесен, хăшпĕр правителствăсен политикинче час-часах пăркаланусем, сасартăк улшăнусем тата политикăна пĕр пек тытса пыманнисем пулса пыраççĕ.

ССР Сойузĕн позицийĕ çинчен каласа пама тытăнса, Литвинов йулташ çапла каланă:

— Совет правителстви, мире йуратакан ытти государствăсемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлесе пырас шутпа Лига нацине кĕрсе, мире сыхлама чи хăватлă майсене сĕнме май пулнă чухне кашни хутрах сĕннĕ, ун пек майсене вăл Лига наци уставĕпе килĕшӳлĕн тунă коллективлă хăрушсăрлăх системине организацилениинче, çавăн пекех тата агрессорсене хирĕç тăма пĕр-пĕрине пулăшас тĕлĕшпе уйрăм çĕршывсем пактсем тунинче курнă. Совет правителстви Франципе тата Чехословакипе çавăн пек пактсем туса, ĕçре çав çул çине тăчĕ,—çав пактсем агреççи çук чухне нихăш государствăна та хăрушлăх кӳмеççĕ.

Йулашки тăватă çул хушшинче Лигă пактчĕ тăрăх тата Парижре тунă Бриан-Келлог договорĕ тăрăх çĕршывсем хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене пăснисем, пĕр государствăсем теприсем çине тапăннисем пулчĕç, çавсем ĕнтĕ пĕтĕм çĕршывсем умĕнче преступленисем туни çине Совет правителстви хăй хыттăн хирĕçле пăхнине палăртма та анчах мар, тата вăл агрессора коллективлăн отпор парас тĕлĕшпе тумали пур ĕççене те, унпа агрессор хушшинчи хутшăнусем пур-пĕрех пăсăласса пăхмасăр активлăн хутшăнма хатĕррине палăртма сăлтавсем пачĕç. Совет правителстви çавна тунă чухне çапла асăрхаттарнă:—тĕнчери çĕршывсем агрессорсем тĕлĕшпе пассивлă пулсан тата агреççине пĕр хут наказанисĕр хăварсан, ун хыççăн çавăн пеккисем урăх та пулаççĕ, тата нумайланаççĕ, тенĕ. Тĕнчери пурнăçра пулса пыракан ĕçсем, шел те, çавăн пек асăрхаттарса каланисем тĕрĕссине кăтартса параççĕ. Австрийе çар вăйĕпе кĕрсе кайни, Австри халăхĕ политикă, економикă тата куљтурă тĕлĕшпе никама пăхăнмасăр пурăнассине ирĕксĕрлесе пĕтерсе хуни, çакна çĕнĕрен кăтартса тăраканни пулат̆.

Агреççи тунисем иртнĕ вăхăтра Йевропăран инçетри йе чылай инçетри материксем çинче, йе Йевропă хĕррисенче пулнă пулсан, унта, агреççирен тӳсекенĕн интересĕсемпе пĕрлех, сывăхри темиçе çĕршывсен интересĕсене çеç тивнĕ пулсан, хаљхинче пусмăрлува Йевропă центрĕнче тунă, çавă вăл, хаљхи вăхăтран ĕнтĕ агрессорпа чикĕлĕ 11 государствăшăн çеç мар, Йевропăри государствăсемшĕн пуриншĕн те тата Йевропăрисемшĕн те анчах мар хăрушлăх туса хунă. Пĕчĕк государствăсен çĕршывне никам тĕкĕнмеле марришĕн, йепле пулсан та, вĕсем политикă, економикă тата куљтурă тĕлĕшпе никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн хăрушлăх туса хунă, çав пĕчĕк государствăсене пусмăрласа илни ĕнтĕ шултра государствăсем çине те хĕсме тата тапăнма та мĕн кирлине туса хурат̆.

Чи малтан Чехословакишĕн хăрушлăх пулса тăрат̆, унтан çав хăрушлăх агреççи вăл йерекенскер пулнăран, çĕршывсем хушшинче çĕнĕрен хирĕçӳсем пулса ӳссе кайас хăрушлăх пур, вăл халех ĕнтĕ Пољшăпа Литва чиккинчи хусканулă лару-тăрура палăрса тăрат̆.

Хаљхи вăхăтри пĕтĕм тĕнчери лару-тăру мира йуратакан пур государствăсем çине те тата уйрăмах пысăк державăсем çине Йевропăри, Йевропăри те анчах мар, халăхсен малашнехи кунçулĕшĕн ответлăх хурат̆. Çав ответлăхри хăйĕн тӳпине Совет правителстви туйса тăнине асра тытса, çавăн пекех тата унăн Лигă уставĕнчен, Бриан-Келлог пактĕнчен, вăл Франципе тата Чехословакипе пĕр-пĕрине пулăшасси çинчен тунă договорсенчен тухса тăракан обйазателствисене асра тытса, епĕ унăн йачĕпе çапла калама пултаратăп: вăл, унпа хăйпе пĕрле йышăнсан, агреççи малала сарăлассине чарса лартмали тата çĕнĕрен пĕтĕм тĕнче вăрçи пулас хăрушлăха — ӳссе кайнăскерне — сирме коллективлă ĕççене хутшăнма халиченхи пекех хатĕр. Вăл ытти державăсемпе хаљхи лару-тарува кура тумали ĕçсем çинчен Лигă нацинче йе унăн тулашĕнче сӳтсе-йавма тытăнма хатĕр тăрат̆. Ыран тен кайа пулĕ, анчах паян, государствăсем пурте, уйрăмах пысăк державăсем, мира коллективлăн çăлса хăварас ыйту тĕлĕшпе çирĕп те иккĕленмеле мар позици йышăнсан, çавна ваљљи вăхăт иртмен-ха.

Пичет представителĕсем панă ыйтусем çине ответлесе, Литвинов йулташ çапла пĕлтернĕ: ССР Сойузĕн правителстви асăннă ыйтусем çине Литвинов йулташăн çӳлерех илсе кăтартнă зайавленийĕнче каланă пек пăхни çинчен йутçĕршывсен правителствисене пĕлтерме ССР Сойузĕн полпречĕсене хушнă, тенĕ.

(ТАСС).

Германи çарĕсем Чехословаки чиккинче

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). „Дейли телеграф енд Морнинг пост" хаçат сăмахĕсем тăрăх, Англи кабинечĕ Вăтаçĕр Йевропăри лару-тăру çинчен ĕнер те сӳтсе-йавнă. „Англи правителстви аллинчи сведенисем,—тесе çырат̆ хаçат,— Германи Чехословакипе йунашар чикĕ тăрăх пĕтĕм лини тăршшĕпех чылай вăйсем каплантарнă. Никама пăхăнса тăман тата тепĕр государствă умĕнче хăрушлăх тăрат̆, тесе шутлаççĕ Англи министерĕсем".

Паттăр папанинецсем „Таймыр" тата „Мурман" çинчи експедици участникĕсене кĕтсе илесçĕ. Ив. Халин фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Йулашки хыпарсем

Литва Пољшă уљтиматумне йышăннă

Каунасран (Литва столици) пĕлтереççĕ: Литва правителстви Пољшă правителстви ыйтнисене пурнăçа кĕртме тата Литвапа Пољшă хушшинчи дипломатилĕ çыхăнусене йĕркелесе йама йышăннă.

* * *

Пољшăпа Литва хушшинчи йĕркелĕ пулса пыракан дипломатилĕ çыхăнусем, Литва хулине—Виљнона пољаксем вăйпа ирĕксĕрлесе туртса илнĕ хыççăн 1920 ç. чарăнса ларнă пулнă.

Виленщинă кам аллинче пулмали çинчен конференцисенче тата Лигă нацире темиçе çул хушши калаçусем пынă. Литва, Пољшă Виљнона туртса илнине йышăнман, Пољшă правителствипе дипломатилĕ çыхăнусем тытман.

Фашисла агрессорсем пĕр чарусăр Испанире вăрçнине тата Германи Австрине туртса илнине Англипе Франци нимĕнле отпор та паманнине курса, Пољшă хăйĕн Германи хуçисен приказĕ тăрăх Литва чиккинче хирĕçӳ пуçарса йачĕ. Ку хирĕçӳпе Пољшă Литва умне Виљнона туртса илнине йышăнма, тата икĕ государствă хушшинче йĕркелĕ дипломатилĕ çыхăнусем тытса тăма ыйтусем лартма усă курнă. Литва чиккине Пољшă çарĕсене илсе пынă. Пољшăра фашиссем митингсемпе демонстрацисем организациленĕ, ку митингсемпе демонстрацисенче уççăнах Литвана туртса илме чĕннĕ.

Литва, лару-тăрува çивĕчлетес мар тесе, лăпкă саманана пăсса йарас мар тесе Пољшă ыйтнисене йышăннă.

(ТАСС).

Йутçĕршыв хаçачĕсем Литвинов йулташ зайавленийĕ çинчен

ЊЙУ-ЙОРК, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). „Њйу-Йорк Таймс" тата „Гераљд трибӳн" хаçатсем Литвинов йулташăн йутçĕршыв журналисĕсене панă зайавленине пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çав зайавлени калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине паллă тăваççĕ.

„Њйу-Йорк таймс" хаçат корреспонденчĕ Денни çапла çырат̆: „Пĕтĕмĕшлĕ лăпкă самана умĕнче тăракан хăрушлăхпа кĕрешес тĕлĕшпе васкасах аслă державăсен (Германисĕр, Йапонисĕр, Италисĕр пуçне) конференцине пухасси çинчен державăсенчен чи малтан Совет Сойузĕ сĕнӳ пачĕ".

„Гераљд трибӳн" хаçат корреспонденчĕ Берно çапла çырат̆: „Совет Сойузĕ мĕн пур мирлĕ çĕршывсене агреççине отпор парас тата тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе йарас тĕлĕшпе халех ĕçе тытăнма чĕнчĕ".

ПАРИЖ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Литвинов й. йутçĕршыв журналисĕсене панă зайавлени пирки „Ер нувељ" хаçат çапла çырат̆: „Çак зайавлени мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен паллă туса калама кирлĕ мар. Лигă наци принципĕсемпе килĕшекенсем пурте вăл зайавленипе чĕррĕн те тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç".

„Евр" хаçатра Табуи çырнă тăрăх, Парижре „Литвинов сĕнӳне пит пысăккăн пахалаççĕ". Кунта сăмах „Лигă нацине, коллективлă хăрушсăрлăх принципĕсене хаклакан тата договорсене хисеплекен çĕршывсен килĕшӳвĕ" çинчен пулма пултарат̆,—тесе çырат̆ Табуи. Вăл çапла калат̆: „Литвинов зайавленийĕ Совет Сойузĕ фашисла державăсен тискер хăтланувĕсене хирĕç тăма шутланине ĕнентерсе парат̆".

БУХАРЕСТ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Румынири пĕтĕм пичет: „ССР Сойузĕ мирлĕ государствăсен конференцине пухасшăн", „Совет Сойузĕ агрессора хирĕç кĕрешет" йатлă заголовкăсемпе Литвинов йулташ зайавленине курăнмали вырăна пичетлесе кăларнă. Пичет Литвинов йулташ зайавленийĕнчи Лигă наци уставĕнчен тухмасăр агрессора коллективлăн отпор парасси çинчен тата коллективлă хăрушсăрлăх çинчен каланă вырăнсене паллă тăват̆.

Австрири гитлерла террор

ПРАГĂ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Прагăри хаçатсем, фашисла Германи Австрине туртса илнĕ май, Австрире пулса пыракан событисем çинчен халĕ те тĕплĕн кăтартса пичетлесе пыраççĕ. Австри никама пăхăнмасăр пурăнма чарăннă май тата Венă хулине провинцилĕ хула туса хунă май, унта Йевропăри тата ытти çĕршывсен посољствисемпе миççисем малашне пулмаççĕ.

Хаçатсем массăлă арĕссем, хăйсене хăйсем вĕлернисем, Австри учреждениссемпе организацисене „тасатасси" халĕ те пулса пыни çинчен пĕлтереççĕ. Венă хулинче кăна 4 пин çын ытла арĕсленĕ. Ытла туллийех мар цифрăсем тăрăх, иртнĕ ерне хушшинче 300 çын ытла хăйне хăй вĕлернĕ; сăмахран, йулашки виçĕ кун хушшинче Венăра 60 çын хăйне хăй вĕлернĕ.

Çаратса тустарас ĕç те пысăккăн пулса пырат̆. Малтан Австри канцлерĕ пулнă Дољфусăн арăмĕ Венăран тухса тарсан, унăн хватерне йалтах çаратса тустарнă.

Талкăшпех арĕссем, ухтарусем, конфискацисем туса пыни Австри пурăнакан халăхсене хыттăн тарăхтарат̆. Гитлерла власçем хăйсен ирсĕр ĕçĕсене „коммуниссем" çине йăвантарма хăтланнипе таса пуласшăн.

Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Австрире чылай вырăнсенче йĕркесĕрлĕхсем пулса пыраççĕ. Австри гитлеровцисем: Гитлер власа хăй аллине туртса илни пире пысăк вырăнсене тата пысăк шалу тӳлекен вырăнсене кĕрсе ларма май парат̆, — тесе кĕтнĕ пулнă, анчах вĕсем шанни ахалех пулнă. Австрине туртса илсе, Гитлер Германирен хăйĕн çыннисене темĕн чухлĕх хăваласа илсе пынă, вĕсем мĕн пур ответлă тата материаллă условисем йенчен лайăх ĕççене турта-турта илеççĕ.

Учреждениссемпе организацисене „тасату" тунă май Венăра йеврейсене—служащисемпе рабочисене 12 пин çын ытла ĕçрен кăларса йанă.

Гитлер хушнă тăрăх, Австрин нацилĕ банкне пĕтереççĕ, банкăн хаклă йапалисене пурне те Германине куçараççĕ. Берлина 200 мĕлйун маркăлăх ылттăн ăсатнă та ĕнтĕ.

(ТАСС).

Варшавăра йеврейсен çемйисемпе çурчĕ-йĕрĕсене аркатаççĕ

ВАРШАВĂ, мартăн 19-мĕш (ТАСС). Пољшăри нумай хаçатсем Литва Пољшă уљтиматумне йышăннине пĕлтерсе васкавлăн тухнă. Варшавăра çак васкавлă хаçатсем тухсанах йеврейсен çемйисене тата вĕсен пурлăхĕсене аркатма пуçланă.

Мазурукпа Фарих йулташсен самољочĕсем Амдермăран вĕçсе тухма хатĕр

Мартăн 17-мĕшĕнче Мазурукпа Фарих йулташсем тытса пыракан икĕ йăвар самољот Тихайа бухтăран Амдермăна кайма вĕçсе тухнă. Икĕ самољот çинче 41 çын, вăл шутрах Тихайа бухтăра хĕлкаçнă-скерсем пур, вĕсем материк çине таврăнаççĕ. Пĕлĕтсенчен çӳлте, 2.500 метр çӳлĕшĕнче 7 сехет хушши вĕçнĕ хыççăн, самољотсем Амдермăра ăнăçлă анса ларнă.

Мартăн 19-мĕшĕнче Мускавпа Амдермă хушшинче радиотелефонпа тӳррĕн çыхăннă. „Н-213" самољот çинчи Совет Сойузĕн Геройĕ Шевелев йулташпа Фарих йулташ икĕ карап та малашне вĕçме хатĕрри çинчен пĕлтернĕ. Вĕçме сантталăк начар пирки çеç чарăнса тăраççĕ. Амдермăна тĕтресем хупласа тăраççĕ, кун пек чухне вĕçме хăрушă.

(ТАСС).

Столицăри комсомол тинĕс-çар флотне илнĕ шефа çирĕплетсе пырат̆

Комсомол тинĕс-çар флотне шефа илни 15 çул тултарнă куна, Мускаври комсомол организацисем шефа илнĕ карапсемпе çыхăнассине çирĕплетнипе паллă тăваççĕ. Çамрăксем хушшинче тинĕс-çар флочĕ çинчен калаçусем туса ирттереççĕ, музейсене, театрсене, кинона кайса кураççĕ.

Сталинский районри комсомол организацийĕ „Октябрьская революция" йатлă линейлă карапа шефа илнĕ. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине уйавлама линкор çинчен хăйсене шефа илнисем патне делегатсем пынă. Хăнасем районри предприйатисене пырса курнă, çамрăксене бойецсен пурнăçĕпе, йăлипе тата çар ĕçне вĕренни çинчен палаштарнă.

Сокољнический районри комсомолецсем ытти карапсене шефа илсе, бойецсемпе çыру урлă тата пĕр-пĕрин патне кайса çӳресе çыхăну тытаççĕ. Сокољнический райсоветăн музыкă фабрикĕнчи Гуров йулташăн çамрăксен бригади морйаксене парнелеме хĕлĕхлĕ инструментсем туса хатĕрленĕ.

(ТАСС).

Кăнтăрта çураки пуçланнă

Кăнтăрти районсенче пур çĕрте те уйхирти çурхи ĕçсем пуçланнă. Совет Сойузĕнче мартăн 15-мĕш тĕлне мĕн пурĕ 719. 100 гектар çине пучахлă тырăсем акнă. Иртнĕ çулта çак вăхăтах 588 пин гектар акнă пулнă.

(ТАСС).

Парти хуҫалӑхӗнче ҫирӗп йӗрке пулмала

ЙӖПРЕҪ. Парти хуҫалӑхне йӗркелӗ тытасси парти пуҫламӗш организацийӗсемшӗн ҫӗнӗ хыпар мар. Кун пирки ПСК(б)Парти Тӗпкомӗ ҫителӗклӗ кӑтартусем панӑ.

Анчах ҫав кӑтартусене парти хӑшпӗр пуҫламӗш организацисем начар пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Ҫав организацисенче парти хуҫалӑхне ытла та йапӑхтарса йанӑ. Ку шутра Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗ ҫумӗнчи парторганизаци тӑрат̌. Парторг Шебеков коммунистсене учота илсе пырас ӗҫре Парти Тӗпкомӗн инструкцине уҫҫӑнах пӑснӑ. Ӑна ҫакӑнтан та аванах курма пулат̌: Каргин коммунис 1937 ҫулти Октябӗр уйӑхӗнчен вара вӑл организацинче учотра тӑнӑ, анчах ӑна ҫак тарана ҫитсе те коммунистсен списки ҫине кӗртмен. Пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫнӑ чухне парти райкомӗ паракан прикрепительнӑй талонсене пӗрне те ҫӗлесе хуман, вӗсем тӗрлӗ хутсем хушшинче сӑпаланса выртаҫҫӗ. Парторг Шебеков:—„Манӑн ӗҫ нумай, йӗрсейместӗп...“ тесе тӳрре тухма тӑрӑшат̌.

Член укҫи пухасси вӑхӑтра пулса пымаст̌. Шебеков умӗн парторг пулса ӗҫленӗ Нефедӑв 72 тенкӗ ытла член укҫине салатса йанӑ, ӑна халӗ те шыраса илмен.

Вӑрманта ӗҫлекен рабочи емпе колхозниксем хушшинче политикӑла агитаци ӗҫне тивӗҫлипе организацилемен. Вӑрманта ӗҫлекен рабочисем хушшинче стахановецсем сахал мар. Вӗсем хушшинчен парти ретне кӗрес текенсем пур. Анчах парторганизаци парти ретне илессипе ӗҫлемест. Сочувствуйушчисем хушшинче нимӗнле ӗҫ те ҫук. Пӗлтӗр Шелагин рабочине сочувствуйушчисен ретне илнӗ пулнӑ. Ӑна сочувствуйушчисен ретне илнӗ решенине пайан кунччене парти райкомне тӑратмасӑр тытса усранӑ.

Вӑрманпромхоз ҫумӗнчи парторганизаци парти хуҫалӑхне йапӑхтарса йанишӗн парти райком инструкторӗсем те айаплӑ. Райком инструкторӗ Родсанов йулташ вӑл организацинче час-часах пулкаланӑ пулсан та, парти хуҫалӑхне йӗркене кӗртес тӗлӗшпе нимӗнле конкретлӑ ӗҫсем те туман.

Ҫавӑн пекех „Хӗрлӗ фронтовик“ тата Ҫӗнӗ Выҫлири колхозсем ҫумӗнчи парторганизацисенче те парти хуҫалӑхне йӗркелес ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Парти райкомӗн ку организацисем ҫине тивӗҫлипе ҫаврӑнса пӑхмала.

Д. Михайлов.
Ф. Захаров.

Комсомол Шӑхасан райкомӗ ӗҫе вӑйлатат̌

Йанварӗн 5-мӗшӗнче „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫатра „Комсомолӑн шалти ӗҫӗсене вӑйлатмала“ йатлӑ статйа пичетленсе тухрӗ. Ҫав статйара комсомолӑн Шӑхасан районӗнчи организацийӗсем начар ӗҫлесе пыни ҫинчен ҫырнӑччӗ.

Унтанпа ӗнтӗ икӗ уйӑх иртрӗ. Ҫак вӑхӑтра ПСҪЛКС Шӑхасан райкомӗ ӗҫре чылай ҫитӗнӳсем тунӑ.

Партин Тӗп Комитет Пленумӗн решенийӗсем вырӑна ҫитсенех, комсомолтан кӑларнӑ чухне тунӑ йӑнӑшсене кӗске срукра тӳрлетессишӗн ӗҫлеме тытӑннӑ.

Комсомолӑн облӑҫри XIV-мӗш конференци пулса иртнӗ хыҫҫӑн комсомол ретӗнчен 38 ҫын кӑларнӑ, вӗсен хушшинче айапсӑр комсомолецсем те пулнӑ. Акӑ Шӑхасанти вӑтам шкулта вӗрентекен М. Волков комсомолеца, вӑл Кузьмина профсойуз членӗнчен кӑларнӑ чухне алӑ ҫӗклеменшӗн комсомол ретӗнчен кӑларнӑ. М. Волков комсомолецӑн тата Саперовӑпа Михайлова комсомолкӑсен ӗҫӗсене те райкомол бӳровӗ ҫӗнӗрен пӑхса тухса, комсомол ретӗнчех хӑварнӑ.

Политвӗренӳ ӗҫне илсен, кунта та пысӑк улшӑнусем пурри курӑнат̌. Хаљхи вӑхӑтра политвӗренӳве районӗпе 624 комсомолеца тата 283 ҫамрӑка йавӑҫтарнӑ.

Вӗренӳ пахалӑхне ӳстерес тӗлӗшпе пропагандистсене пухса ҫак 3 уйӑх хушшинче 4 семинар туса иртернӗ.

Уйрӑмӑнах Тури Чуракассинчи, Сямти-Вӑрман йалӗнчи политграмӑта кружокӗсем аван ӗҫлеҫҫӗ.

Политшкул ӗҫӗсене лайӑх йӗркеленӗ колхозсенче комсомол ретне кӗресси те ӳсеҫ пырат̌. Йанварӗн 1-мӗшӗнчен вара комсомол ретне 77 ҫын кӗнӗ.

Иванов йулташ ҫырувӗпе Сталин йулташ ответне районти семинарта ӳтсейавнӑ. Хаљхи вӑхӑтра ӑна комсомол пуҫламӗш организацисенче вӗренеҫҫӗ.

Кӑҫалхи ҫул парти ретне кӗме ПСҪЛКС райкомӗ 10 комсомолеца рекомендаци панӑ, вӗсенчен 5 комсомолец ыйтӑвӗсене парти пуҫламӗш организацийӗ пӑхса тухса, вӗсене парти ретне илнӗ. Вӗсем: Шӑхасан МТС-ри чи лайӑх трактористӗ—Тимофейев Никита, Куйбышев йачӗпе тӑракан колхоз председателӗ—Йаковлев йулташ тата ыт. те.

ПСҪЛКС райкомӗ ӗҫре татах ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвасшӑн кӗрешет.

Ил. Сидорин.

Комсомол организацин ҫитӗнӗвӗсем

ШӐМӐРШӐ. Комсомолӑн Асанкассинчи пуҫламӗш организацийӗ йалти ҫамрӑксем хушшинче политикӑла воспитани ӗҫне лайӑх организацилесе пыма тӑрӑшат̌. Комсомол организацийӗ тӑрӑшса лайӑх ӗҫленипех кунта вулав ҫуртӗпе колхоз клубӗ те хӑйсен ӗҫӗсене тивӗҫлипе йӗркеленӗ.

Колхоз клубӗнче тӑтӑшах кино картинӑсем кӑтартаҫҫӗ, йалти драмкружок спектакљсем лартса парат̌. Вулав ҫурт пуҫлӑхӗ Н. Тимошкин йулташ йаланах халӑха хаҫат-журналсем ҫинчен ҫӗнӗ хыпарсем вуласа ӑнлантарса парат̌. Йалсовечӗ те вулав ҫуртне пулӑшса пырат̌, вулав ҫурчӗ валљи кирлӗ йапаласене вӑхӑтра тупса парат̌, вулав ҫурт ӗҫӗпе интересленет. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Асанкасси вулав ҫуртӗнче хаҫат-журналсем, тӗрлӗрен кӗнекесем ҫителӗклӗ. Ҫакӑнтах шашка-шахмӑт, биллиард тата хут купӑста пур. Кӗскен ҫакна каламала, Асанкассинчи ҫамрӑксем 2—3 ҫул кайала пушӑ вӑхӑта нумай чухне усӑсӑр иртернӗ пулсан, хаљ йалтах урӑхла—ҫамрӑксем вӑхӑта усӑллӑ иртерме тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем вӑхӑтра ӗҫлеҫҫӗ, вӑхӑтра канаҫҫӗ.

Комсомол организаци йалти халӑх хушшинче хутла пӗлменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе те ӗҫлет. Акӑ В. Борзов комсомолец хут пӗлменнисене вӗрентет, халӑх хушшинче политикӑла агитацине организацилессипе тӑрӑшса ӗҫлет.

Халӑх хушшинче хаҫат-журнал сарассипе те ҫитӗнӳсем тунӑ.

Хаҫат-журналсене подписчиксем патне вӑхӑтра ҫитереҫҫӗ, подписчиксен йышӗ те ӳссех пырат̌. Анчах ӗҫе татах та темиҫе хут вӑйлатса йани кирлех.

Т. Журавлева.

Ӳкерчӗк ҫинче: Шӑхасанти МТС ҫумӗнчи трактористсен курсӗ.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

Панкратов карйерисӑн сийенлӗ ӗҫӗсем

ПСК(б)Парти Тӗпкомӗн йанварти Пленум решенийӗ хыҫҫӑн, партин пединститутри организацийӗ хӑй тунӑ йӑнӑшсене тӳрлетме тытӑнчӗ.

Коммунистсене пӗр айӑпсӑрах парти ретӗнчен кӑларассинче партком секретарӗ Д. И. Панкратов карйерис малти вырӑнта тӑнӑ. Вӑл пуҫарса пынипе икӗ уйӑх хушшинче 5 ҫынна парти ретӗнчен кӑларнӑ.

Панкратов, коммунистсен пухӑвӗсенче, партипе совет влаҫне чӗререн парӑнса ӗҫлекен коммунистсем ҫинчен тасаранах елеклӗ сӑмахсем тухса каланӑ. Вӑл коммунистсене „халӑх тӑшманӗ“ йатне парса мухтава тухма васканӑ. Пуху ун шухӑшӗпе килӗшмесӗр тӑрсассӑн: „Партком знает“ тесе тавлашнӑ. Панкратов сӑмахӗ тӑрӑх, студентсемпе преподавателсем хушшинче „Руденко халӑх тӑшманӗ“ текен хыпар саланнӑ. Пӗтӗм институт Руденко ҫине тӑшман ҫине пӑхнӑ пек сиввӗн пӑха пуҫланӑ. Руденко преподавателӗн вӗрентес хаваслӑх пӗтсе ларнӑ, никам та ӑна итлемен, пулӑшман.

В. А. Андрейев, С. И. Николайев, Д. Ф. Андрейев, В. Г. Софрошкин йулташсене те ҫавӑн пекех Панкратов елекӗсем тӑрӑх ним айӑпсӑр ПСК(б)П членӗнчен кӑларнӑ.

Д. Ф. Андрейев, В. Г. Софрошкин, С. И. Николайев, В. А. Андрейев йулташсем айӑпсӑррине кура, ПСК(б)П хула комитечӗ вӗсене парти ретӗнчех хӑвармала тунӑ.

Кунпа пӗрлех Панкратов пединститут дирекци ӗҫне хавшатасшӑн пулнӑ. Ҫав майпа та вӑл институт директорӗ Харитонов ҫинчен, ӑна ӗҫрен кӑлартарас тесе, РСФСР Ҫутӗҫ халӑх комиссариатне елеклӗ ҫыру йанӑ: „Харитонов институтра троцкистсене, буржуалӑ националистсене тытса усрат̌. Хӑй те вӗсемпе ҫыхӑну тытат̌“ тенӗ.

Анчах ӗҫ пачах апла мар. Харитонов йулташ пединститутра халӑх тӑшманӗсене тытса тӑни, вӗсемпе ҫыхӑну тытни пулман.

Харитонов йулташ вӗренӳ ӗҫне ӳлти пусӑма лартассипе пӗтӗм вӑйа хурса ӗҫлет.

ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти Пленумӗн решенийӗ хыҫҫӑн, институтри парторганизацин пухӑвӗ йӑнӑшсене тӳрлетесси ҫинчен ӳтсе-йаврӗ. Пуху карйерис Панкратовӑн сӑтӑрла ӗҫӗсене пӑхса тухса, ӑна парти комитет секретарӗнчен хӑтарчӗ. Унӑн заместителӗ пулнӑ Г. Гермонов йулташа та пуху хытӑ йатларӗ.

Халӗ те пулсан Институтри парторганизаци ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти Пленумӗн решенине кашни парти членӗ, кандидачӗ, сочувствуйушчи патне ҫитерессипе татӑклӑ улшӑнусем туман-ха. Уйрӑмӑнах—парти кандидатне илесси, кандидатран парти членне куҫарасси ҫителӗксӗр пулса пырат̌.

Арк. Нестеров.

Тунӑ ӳсӗмсем лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантараҫҫӗ

Иртнӗ ҫулхи йалхуҫалӑх ҫулӗнче епӗр пысӑк ҫӗнтерӳ турӑмӑр. Халӗ пирӗн тӗштырӑсемпе ыттисимӗҫсем нумай, выљӑх апачӗсем те ҫителӗклӗ. Ҫаксене колхозра тӳрӗ ӗҫленипе, ҫӗрӗҫӗнче агротехникӑна тӗрӗс пурнӑҫласа пынипе ҫӗнсе илтӗмӗр.

Кӑҫалхи ҫуракине иртнӗ ҫулхинчен те лайӑхрах хатӗрленсе тухма пултаратпӑр. Нумайах та пулмаст̌ пире хамӑр колхоз членӗ, йалхуҫалӑхӗнче малта пыракансен сљочӗн делегачӗ Рысаков йулташ сљот решенийӗсем ҫинчен ӑнлантарса пачӗ. Сљотра республикипе илсен вӑтам шутпа гектартан 100 пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илес задачӑ лартнӑ. Паллах кӑна епӗр пурнӑҫлама пултаратпӑр. Сталин йулташ ҫулсеренех 7—8 мӗлйард пӑт тӗштырӑ туса илмелле тенӗ лозунг пире вӑйлӑ тырпулшӑн татах та хӗрӳллӗн кӗрешме хавхалантарат̌.

Пирӗн „Хӗрлӗ Октябӗр“ колхоз (Ҫӗмӗрле районӗ) членӗсем Чӑваш республикинчи йалхуҫалӑхӗнче малта пыракансен сљочӗ Тутар тата Мордва республикисене социалисӑмла ӑмӑртува чӗннине пысӑк хапӑл туса йышӑнса илчӗҫ. Колхозри бригадӑсем хушшинче ӑмӑрту ӗҫӗ сарӑлсах пырат̌. Епӗр, 3-мӗш бригадӑри колхозниксем, 1-мӗш бригадӑпа ӑмӑртса ӗҫлетпӗр. Иртнӗ ҫулхи опытсене тӗплӗн шута илсе, кӑҫал гектартан ыраш 20 центнер, сӗлӗ 22 центнер, ҫурхи тулӑ 17 центнер, вир 25 центнер, йӗтӗн ҫӳсӗ 4,5 центнертан кайа мар туса илме пулатпӑр.

Ӑмӑрту договорӗнче кӑтартнӑ обйазателствӑсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пыратпӑр. 1200 лав торф, 711 лав тислӗк уйа кӑлартӑмӑр. 12 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса хутӑмӑр. 36 центнер фосфорит ҫӑнахӗ кӳрсе килтӗмӗр. Мӗн пур вӑрлӑхсене суртласа, суртлӑ вӑрлӑхсемпе улӑштарса хатӗрлерӗмӗр. Йалхуҫалӑх машинӗсем пӗтӗмпех йусавлӑ.

Тырпул тухӑҫне ӳстерсе пырасси хисеплӗ ӗҫ. Ҫакна ӗнтӗ ҫуракине лайӑх хатӗрленсе тухнипе, пӗтӗм ӗҫсене тимлӗн туса пынипе пурнӑҫлама пулат̌. Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем турӑмӑр. Анчах та вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн татах та кӑтартуллӑн ӗҫлени кирлӗ. Ҫакна май агротехникӑла ҫӗнӗ ӗҫсене татах та хӗрӳллӗн туса пыма тытӑнатпӑр.

Вӑрлӑхсене йаровизаци туса акма хатӗрленетпӗр. Ыраш калчине 30 процентран кайа мар ҫуркунне ӳрелетпӗр, тата 30 процентран кайа мар апат паратпӑр. Тулӑ, сӗлӗ, вир вӑрлӑхӗсене пӗтӗмпех формалинпа чӳкесе акатпӑр. Агротехникӑри ҫак ӗҫсем иртнӗ ҫулта та пысӑк усӑ пачӗҫ.

Епӗр хамӑр ҫине илнӗ обйазателствӑсене йаланах пурнӑҫласа пыратпӑр. Кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен те вӑйлӑ тырпул туса илме пирӗн пур условисем те пур.

3-мӗш бригадӑри колхозниксем 17 ҫын алӑ пуснӑ.

26 центнер тӗштырӑ туса илессишӗн

Мӑн Вылӑри „Красное Заря“ (Елӗк р.) колхоз членӗсем йалхуҫалӑхӗнче малта пыракансен Чӑваш республикинчи сљочӗ 1938 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн Тутарпа Мордва республикисене ӑмӑртува тӗннине хапӑл туса кӗтсе илчӗҫ. Ҫак ыйтӑва йатарласах колхозниксен пухӑвӗнче ӳтсе-йавнӑ.

Хаљхи вӑхӑтра „Красное Заря“ колхоз Ҫирккассинчи колхозпа ӑмӑртса ӗҫлет. Мӑн Вылӑри колхозниксем иртнӗ ҫулхи ӗҫ опычӗсене шута илсе, кӑҫал вӑтам шутпа гектартан 26-шар центнер тӗштырӑ туса илме, ҫураки ӗҫӗсене 7 кун хушшинче иртерме пулчӗҫ.

Колхозра сухалакансене, ӳрелекенсене, акакансене тата ыттисене вӗрентсе кӑларма 10 агрокружок организациленӗ. Кашни кружокрах 15-шар ҫын вӗренеҫҫӗ. Кружоксенче агротехникӑла ҫӗнӗ ӗҫсене тата иртнӗ ҫулхи паха ӗҫ опычӗсене ӳтсе-йавса вӗренеҫҫӗ. Йулашки кунсенче кружок членӗсем Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйламали Положенине вӗренме тытӑнчӗҫ.

Вӑрлӑх фондне пур кулљтурӑсем тӑрӑх та хывса ҫитерчӗҫ. Икӗ тоннӑ йасмӑк вӑрлӑхне алӑпа пӗрчӗн-пӗрчӗн суйласа тасатнӑ. Удобренисене хатӗрлесе уйа кӑларас ӗҫ сарӑлсах пырат̌. 246 гектар ҫинче йур тытнӑ. Уйа 925 лав тислӗк кӑларнӑ.

Пур бригадӑсенче те йалхуҫалӑх машинӗсене йусаса пӗтерчӗҫ. Кӳлмели таврашсене пӗтӗмпех йусаса хатӗрленӗ.

Колхозра 4 бригадӑ, вӗсем пӗр-пӗрнипе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ӑмӑрту ӗҫӗ сарӑлсах пырат̌. Халиччен тунӑ ӗҫсемпе лӑпланмасӑр, ҫуракине пӗтӗмпех лайӑх кӗтсе илессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Колхоз председателӗ Дарйа Сидорова ҫуракине хатӗрленес ӗҫе лайӑх организациленӗ.

С. Арсентйев.

Хатӗрленсе ҫитменни палӑрчӗ

ШӐХАСАН. Йамашри „Ударник“ колхозпа Уйкас Кипекри Тељман йачӗпе тӑракан колхоз 1938 ҫулхи ҫуракине ӑнӑҫлӑн иртерме, кӑҫал гектартан 150 пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илме пулса социалисӑмла ӑмӑрту договорӗ тунӑ.

Нумайах та пулмаст̌, ҫак икӗ колхоз хушшинче ӑмӑрту мӗнле сарӑлса пынине тӗрӗслерӗҫ. Тӗрӗслесен икӗ колхозӗнче те ҫитменлӗхсем пурри, ҫуракине хатӗрленсе ҫитменни курӑнчӗ.

Уйкас Кипекри Тељман йачӗпе тӑракан колхозӑн (председателӗ Федор Тихонов йулташ) районри ҫӗрӗҫ пайӗ панӑ план тӑрӑх уйа 3.200 тоннӑ тислӗк кӑлармала пулнӑ пулсан, 2.463 лав кӑна кӑларнӑ. Торф 3.000 тоннӑ кӑлармала пулнӑ, вӗсем пачах та хатӗрлемен. Пӗр сӑмахпа каласан, вырӑнти удобренисене хатӗрлессипе начар ӗҫлеҫҫӗ.

Вӑрлӑхсене суртласа пӗтернӗ тесе, Йамашсем лӑпланса ларма шутланӑ. Анчах тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн вӑрлӑхлӑх сӗлле тепӗр хут суртламали курӑнчӗ. Пӑрҫа вӑрлӑхне улӑштарса илмен-ха.

Ал Иванов.

С. И. АНДРЕЙЕВ
Чӑваш йалхуҫалӑх институчӗн доценчӗ

Вӑйлӑ тырпул туса илес ыйтусем

Сталинла вӑйлӑ тырпул туса илес кӗрешӳре колхозсем 1938 ҫулта кирек мӗнле ҫанталӑк пулсан та иртнӗ ҫулхинчен ытларах тырпул туса илме тӑрӑшмала. Ҫак задачӑсене пурнӑҫласси колхозсенчен хӑйсенчен тата йалхуҫалӑх руководителӗсемпе специалисӗсенчен килет.

Иртнӗ ҫулсенче ҫӑмӑр тата йур мӗн чухлӗ ӳкнине илсен тата кӑҫал йур нумай пулнине шута илсен, кӑҫалхи май тата ийуӊ уйӑхӗсенче ҫанталӑк мӗнле пулассине чухлама пулат̌. Епӗр шутланӑ тӑрӑх, май тата ийуӊ уйӑхсенче кӑҫал ҫӑмӑр сахалтарах пулма пултарат пек.

Анчах та, ҫанталӑк ҫавӑн пек пулни, колхозсем иртнӗ ҫулхинчен сахал тырпул туса илессине пӗртте пӗлтермест.

Иртнӗ ҫулти ҫӗртме сухине тата кӗр сухине тарӑн сухаласа хӑварни (ҫителӗклӗ таранах пулмасан та), уйсене нумай ҫӗре ҫемҫетмелисем кӑларни тата кӗр тыррисем йур айӗнчен лайӑх тухас шанчӑк пурри май тата ийуӊ ухӑхӗсенче ҫӑмӑр сахал пулсан та, тырпул аванах пулассине шантарат̌. Ҫуракине большевикла хатӗрленсен, ӗҫе тӗрӗс организацилесе ӗҫлесен, ҫуракине чи кӗске срукра туса иртерсен тата агротехникӑла ӗҫсене пурне те пурнӑҫа кӗртсен колхозсем вара иртнӗ ҫулхинчен те вӑйлӑрах тырпул туса илме пултараҫҫӗ. Ҫакӑ пулат̌ те ӗнтӗ 1938 ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫре таткса параканни.

Конкретлӑ илсен, кӑҫал пӗлтӗрхинчен вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе колхозсен мӗн-мӗн тумала-ха?

Йалхуҫалӑх машинисемпе ӗҫхатӗрӗсене халех йусаса, вӗсем пирки ҫураки вӑхӑтӗнче пӗр сехет те ӗҫ чарӑнса тӑмала мар туса хатӗр тытмала. Ҫавӑн пекех лашасене тата *кӳлмели* таврашсене те ҫуракине тухиччен хатӗрлемеле.

Халиччен суртлӑ вӑрлӑхсене улӑштарса пӗтермен колхозсем ҫав ӗҫе халех туса пӗтермеле.

Вӑрлӑхсене пӗтӗмӗшпех суртласа, вӗсене ҫумкурӑк вӑррисенчен асатса, вутпуҫҫирен чӳхесе тата чи шултра пӗрчисене вӑрлӑх участкисем ҫине акма халех уйӑрса хумала.

Ҫуна ҫулӗ пӗтиччен пур колхозсен те хӑйсене панӑ минераллӑ удобренисене кӳрсе килмеле тата вырӑнти удобренисене те (тислӗк, торф, ҫӗрӗк тӑпри т. ыт. те) уйа кӑлармала.

Ҫуртри акнӑ вырӑна мулљчированни тума кирлӗ материалсене май пур таран ытларах хатӗрлесе хумала. Май тата ийуӊ уйӑхӗсенче ҫӑмӑр сахал пулни ҫанталӑк шӑрӑх пулассине тата час-часах улшӑнса тӑрассине пӗлтерет. Ҫанталӑк шӑрӑх тӑнипе тӑпран ҫийелти сийӗ вӗриленсе кайса, пуринчен ытла хура ҫӗр ҫинче, ҫуртри калчисене ӑша тивме пултарат̌. Мулљчированни туни тӑпра ӑшӗнчи нӳрӗк пӑсланса пӗтессине чакарат̌ тата тӑпра ҫумӗнче сывлӑш температурине питех улшӑнма памаст̌. Ҫавӑнпа та мулљчированни тунӑ вырӑнта калчасем лайӑхрах ӳсеҫҫӗ.

Вӑрлӑхсене ытларах йаровизацилесе тата бионтизацилесе акмала. Йаровизацилесе тата бионтизацилесе акни ҫуртрисене иртерех шӑтма тата тӑпра ӑшӗнчи нӳрӗкпе ытларах усӑ курса, лайӑхрах ҫитӗнме май парат̌.

1938 ҫулта колхозсем йаровизациленӗ тата бионтизациленӗ вӑрлӑхсемпе мӗн чухлӗ ытларах акӗҫ, мӗн чухлӗ ытларах мулчированни тӑвӗҫ, вӗсем ҫавӑн чухлӗ вӑйлӑрах *тырпул туса илӗҫ.*

Кӗрхи тырӑ калчисене нумайрах лаптӑк ҫинче ӳреме тӑрӑшмала.

1938 ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫре ҫуракине вӑхӑтра пуҫласа ӑна чи кӗске срукра пӗтерни уйрӑмӑнах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̌. Ҫураки пӗр куна кайа йулсан та, тӑпрари нӳрӗк ытларах пӑсланса кайнипе, калчасем ҫав нӳрӗкпе сахалтарах усӑ курса йулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та колхозсен тӗрлӗ вырӑнти уйсенче тӗрлӗ вӑхӑтра ӗҫлеме кирлине манса каймала мар. Тӑпра хӑш вырӑнта маларах пиҫет, чи малтан ҫав вырӑнта ӗҫлеме тытӑнмала.

Ҫуртри акнӑ вырӑнсенче мулљчированни тӑвассине те вӑхӑтра пуҫласа, ҫураки пӗтнӗ хыҫҫӑнах кӗске срукра туса пӗтермеле.

Ҫавӑн пекех калчасене вӑхӑтра тата темиҫе хутчен апат парассине те кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен ытларах ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче тумала. Колхоз агротехникӑла паха ӗҫсене мӗн чухлӗ ытларах пурнӑҫлат̌, ҫавӑн чухлӗ ытларах вӑйлӑ тырпул туса илет.

Паллах, вӑйлӑ тырпул туса илес ӗҫре ҫум ҫумлассине вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа иртерни, тырпулсене вӑхӑтра тата пӗр тӑкаксӑр пухса кӗни те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̌.

Сталинла вӑйлӑ тырпул туса илме май паракан агротехникӑлӑ ӗҫсене пурне те лайӑх пурнӑҫлас тӗлӗшпе колхозниксене агротехникӑна вӗрентсе, кашни бригадӑ, кашни колхоз социалисӑмла ӑмӑртува анлӑн сарса йамала.

Ҫаксенчен килет ӗнтӗ 1938 ҫулта иртнӗ ҫулхинчен тухӑҫлӑрах тырпул туса илесси.

Агротехникӑн хӑшпӗр ыйтувӗсем

Ҫӗре тарӑн сухаласси. Ҫуртри тата кӗрхи тырӑ акмали вырӑнсене вӑхӑтра тата тарӑн сухалама кирлӗ. Тачка тӑмлӑ тата хӑйӑрлӑ тӑмлӑ тӑпрасене 20—22 сантиметр тарӑнӑш сухаламала. 1938 ҫулта пур ҫӗрте те ҫавӑн пек сухаламала. Ку вӑл кӗллӗ тӑпралӑ вырӑнсене те тивет. Ҫакӑн пек тарӑн сухалассине ҫӗртме тата кӗр сухи тунӑ чух *пурнӑҫламала.*

Кӗллӗ тӑпрана малтанхи хут *тарӑн сухаланӑ чух унӑн кӗллӗ сийне пӗтӗмӗшпех ҫаврӑса пӑрахса,* ӑна ӗлӗк сухаласа тӑнӑ сийпе хутӑштарса йамала.

Кӗллӗ тӑпралӑ вырӑнсене 20—22 сантиметр тарӑнӑш сухаланӑ чух тислӗк, торф, ҫӗрӗк тӑпри, компост, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ т. ыт. те пуринчен малтан кӗллӗ сий 5 сантиметр хулӑмӗш тухакан вырӑнсене кӑлармала. Ун пек вырӑнсене йушкӑн тата мергел кӑларни те пит усӑлӑ. Мергел извӗҫ тӑкас ыйтӑва та татса парат̌. Уйа йушкӑн йе мергел кӑларсан органикӑла удобренисене те тӑкма йурат̌, анчах мергел кӑларнӑ вырӑнта калчасене аммони-суљфачӗ йе селитрӑ сапса апат пама тӑрӑшмала, суперфосфат йе силвинит пулсан, вӗсене те сапма йурат̌.

Ҫӗрулми вырӑнӗсене 22 сантиметртан та тарӑнрах сухалама кирлӗ, ҫавӑн пекех пӗрчӗлӗ тырӑ акнӑ чух хӑйӑрлӑ вырӑнсене те 25—30 сантиметр тарӑнӑш сухалама йурат̌.

Шыв йухтарса кайакан вырӑнсенче, хӗрлӗ тӑм сийӗ ҫийелте пулсан, паллах, 20 сантиметртан *ӑшӑхран сухаламала,* йе, урӑхла каласан, тӑм сийӗ таран ҫеҫ сухаламала.

Сухаласа тӑракан сий айӗнче сийенлӗ хытӑ сий пулса кайассӑран, ман шутпа, йаланах пӗр пек тарӑнӑш сухалама кирлӗ мар. Нумай *ҫул ӳсекен курӑксем (клевӗр, люцернӑ т. ыт. те) акнӑ вырӑна* йулашки хут ҫулса илнӗ хыҫҫӑн 18 сантиметр тарӑнӑш те сухалама йурат̌, анчах унтан кайа мар. Кайран вара 20 сантиметр тарӑнӑш, тепӗр ҫулне 22 сантиметр сухаламала.

22 сантиметр тарӑнӑш сухалани хӑшпӗр вырӑнсенче ҫителӗксӗр те пулма пултарат̌. Ҫапах та 1938 ҫулта 20—22 сантиметр тарӑнӑш сухалани иртнӗ ҫулта сухаланинчен шутласа илсен пысӑк ҫитӗнӳ пулӗччӗ, мӗншӗн тесен 1937 ҫулта хура тӑпра тата вӑрман-уй тӑпри ҫинче 12—20 сантиметр тарӑнӗш ҫеҫ сухаланӑ, кӗллӗ тӑпралӑ вырӑнсенче нумай колхозсем 10—18 сантиметр тарӑнӗш ҫеҫ сухаланӑ.

Тарӑн сухалани ӑшӑх сухаланинчен мӗн чухлӗ усӑлӑрах пулнине йалхуҫалӑх институчӗн вӗренӳ хуҫалӑхӗнче Антипов-Каратайев профессор кӗллӗ тӑпралӑ вырӑнта тунӑ опыт питӗ лайӑх кӑтартса парат̌. 12 сантиметр тарӑнӗш сухаланӑ участкӑсем ҫинче 1937 ҫулта тулӑ гектартан 12 центнер тухнӑ, 24 сантиметр тарӑнӗш сухаланӑ участкӑсем ҫинче 19,8 центнер тухнӑ (65 процент ытларах).

20—22 сантиметр тарӑнӗш тӗрӗс сухаласси трактористсенчен те нумай килет. Ҫавӑн пек тарӑнӗш сухалакан трактористсем мухтава тивӗҫ. Ӑшӑх сухалакан трактористсене йатлани те кирлӗ.

Ҫавӑн пек трактористсем иртнӗ ҫулта Патӑрйел МТСтанцинчи Йершов бригадинче пулчӗҫ. Договор тӑрӑх ирхи ҫӗртмене тракторпа 18 сантиметр тарӑнӗш сухаламала пулнӑ. Анчах колхозниксемпе вырӑнта тӗрӗслесе пӑхсан, Мӑнтӑрпа Ҫӳлти Кипеҫ колхозӗсенче Йершов бригади, тарӑн кура тӑпра пулсан та, 10—14 тата *12—16 сантиметр тарӑнӗш ҫеҫ сухалани палӑрнӑ,* 6 гектар ҫинче 3—9 сантиметр тарӑнӗш ҫеҫ сухаланӑ.

Йершов йулташ хӑйӗн бригадинчи трактор плугӗсем ҫумне тата „геновски“ плугсем кӑкарса сухаланӑ. Мӑнтӑр колхозӗнче сухаланӑ чух „геновски“ плуг 14 см тарӑнӗш, малта пыракан трактор плугӗ „оригинал“ 10—12 сантиметр тарӑнӗш ҫеҫ илсе пынине хамӑрах куртӑмӑр.

Ҫӳлти Кипеҫри „Трактор“ колхозри пахалӑх комиссийӗ Йершов бригадин ӗҫне браклана. Анчах комиссӗ членӗсене вӑл: „Есӗр тракторпа ӗҫленине тата пӗтӗм йалхуҫалӑх машинисене хирӗҫле ҫынсем, ҫавӑнпа есӗр тракторпа сухаланине тиркетӗр“, тесе хӑратса, 3 гектар ҫинче 5—9 сантиметр тарӑнӗш сухаланӑ вырӑнсӑр пуҫне, ыттине ҫапах та йышӑнтарнӑ. Йышӑнман 3 гектарне ҫапах та тепӗр хут сухаламан.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителстви

Çирĕп йĕрке тумала

Тата пĕр-икĕ кунтан лини хываkan бригадăсем Унгă шывĕ урлă каçаççĕ. Ку вырăна çитиччен бригадăсем 52 километр та 474 метр тăршшĕ лини хывнă. Унсăр пуçне Трак разйезĕнчи тата Çĕрпӳ станцинчи линисене, Кĕçĕн Çавал шывĕ патĕнчи хăйăр илмели вырăн патне çӳремели линийе хывнă

Унгă шывĕ урлă каççан, лини хывассине хăвăртлатма ку таранччен хинчен лайăхрах условисем пулаççĕ. Текех лини хывас ĕçе чарса тăракан пысăк кĕперсем пулмаççĕ. Лини хывмали вырăнсем те лайăхрах. Ĕçре çирĕп йĕрке туса тимлĕн ĕçлеме тытăнсан, ĕç хăвăрттăн малала кайма пултарать.

Анчах халĕхи вăхăтри ĕçсем строителствăра çирĕп йĕрке, лайăх организацилĕх çукки çине кăтартса параççĕ. Тунă график тăрăх, кашни куллен 1950 метр тăршшĕ лини хывмала. Ку графике нихăш кунта та пурнăçа кĕртмен. Чи нумай хывасси строителствăна Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Спасов йулташ пынă вăхăтра пулнă. Ун чухне пĕр кун хушшинче 1650 метр тăршшĕ лини хывнă. Кайран вара татах малтанхи пекех йерипен ĕçлеме пуçланă.

Çав ӳсĕме мĕнле туни çинчен халап пуçланса машинлă станци начальникĕ Гольбаум йулташ та маçтăрсем те тата ытти работниксем те вăл кунхине пĕтĕм ĕçе лайăх организацилени çинчен калаççĕ. Мĕнле вара, халĕ ĕçе çав кунхи пекех организацилеме майсем çук-и мĕн? Майсем те çителĕклĕ, анчах тимлесе, çине тăрса ĕçлени çук Ака бригадăсем хушшинчи ĕçе йĕркелессинех илер. Бригадăсем патне кашни кун тумали ĕçсен планне çитермеççĕ. Вĕсем мĕнле ĕçлесе пыни çинчен пĕлтерсех тăмаççĕ. Час-часах бригадăсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçараççĕ. Çапла бригадăсем хăйсем ĕнер мĕнле ĕçлени, ыран мĕн ĕçлемели çинчен пĕлмеççĕ. Паллах, кун пек чухне стахановла йухăмпа социалисăмлă ăмăртува кирлĕ пек вăйлатма май çук.

Лини хывнă çĕрте механизăмсем çителĕклĕ таран пур. Вĕсемпе усă курассине те кирлĕ пек йĕркелемен. Тракторсем тата мотовозсем ахалех лараççĕ. Вĕсемпе усă курма çунтармали йапаласем кирлĕ таран тăратас тĕлĕшпе строителствă управленинчи снабжени пайĕ питех сӳрĕккĕн ĕçлет. Ун çинчен строителствă начальникĕ Вавилкин та, аслă инженер Черный та пĕлет. Вĕсем те ĕçе лайăхлатассишĕн васкамаççĕ.

Рабочисем хушшинче культурăлă-массăлă ĕçе вăйлатас пирки икĕ-виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ калаçаççĕ. Анчах сăмах сăмахпах йулать-ха. Ĕçе тивĕçлĕн пуçарса йани халĕ те çук.

Строителствăри руководителсен тата партипе профсойуз организацисен çакна йаланах асра тытмала: ĕçре çирĕп йĕрке туни, ĕçе тĕрĕс организацилени пĕтĕм ĕçе ăнăçлăн пурнăçлассине татса парать. Çавăнпа йĕркелĕхшĕн, лайăх организацилĕхшĕн, çирĕп дисциплинăшăн куллен, çине тăрса ĕçлесе пымала.

Мала тухассишĕн тăрăшатпăр

Манăн бригадă 6 çынтан тăрать. Вĕсем пурте хĕрарăмсем. Бригадăра уйрăмăнах Елĕк районĕнчен килнĕ колхозницă Пелагейа Васильева лайăх ĕçлет. Ĕçе йаланах тĕплĕн те çыпăçулăн тата пысăк хăвăртлăхпа туса пырать.

Епĕр пурте чукунçула хăвăртрах туса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр. Пире ĕç йăлăхтармасть, мĕн чухлĕ лайăхрах ĕçленĕ, çавăн чухлĕ ĕçлес кăмăл çĕкленет. Епĕ тĕслĕхрен хамах илетĕп. Чукунçул строителствине ĕçлеме киличчен епĕ чылай çулсем хушши вылăхсем пăхса пурăннă. Ун чухне кун пек машинсемпе ĕçлесси çинчен шутлама мар, вĕсене курман та епĕ.

Пĕррехинче мана комсомол райкомне чĕнеççĕ те, чукунçул строителствине ĕçлеме тухма сĕнеççĕ. Епĕ килĕшрĕм. Кунта килсенех мана пĕр уйăх хушши курсра вĕрентрĕç. Çакăн хыççăн вара епĕ ĕç техникине вĕренсе çитрĕм. Лайăхрах ĕçлеме пуçларăм. Кайрантарах мана бригадире куçарчĕç.

Бригадир пулса ĕçлеме тытăнсан та, епĕ ĕç техникине вĕренме пăрахмарăм. Хамăн пĕлĕве ӳстерсех пырассишĕн тăрăшрăм. Политикă йенчен те чылай ӳсрĕм. Вара манăн ĕç, çавăнпа пĕрлех пĕтĕм бригадăн ĕçĕ ăнăçлăн малала кайма пуçларĕ.

Чукунçул строителствинче лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пире премилерĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен Коммунисла кунĕнче те парнелерĕç. Кусем мана хытă савăнтараççĕ тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Епĕр халĕ малти вырăна тухассишĕн кĕрешетпĕр. Хамăрăн ĕçре тата пурнăçра стахановла ĕçлекен Тарасов бригадин ĕç опычĕсемпе тата уйрăм стахановецсен паха тĕслĕхĕсемпе усă куратпăр.

К. Рубцова.

Йур турттаракан пойăс

Мартăн малтанхи кунĕсенче чукунçула çурхи шыв пăсса кайасран сыхламали ĕçсене тăвасси пуçланчĕ. Лини хĕррине канавсем чаваççĕ. Кĕперсемпе трубасем патĕнче шыв йухмали вырăнсене тасатаççĕ.

Йур нумай тулнă тата шыв капланса тăма пултаракан вырăнсенчен йур турттарма йатарласа пойăс уйăрнă.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви. Ӳкерчĕк çинче: Рельсăсем хывнă çĕрте. Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Çĕнĕ кадрсем

Чукунçулне туса пĕтерсенех унпа туллин усă курма тытăнма тата ăна пăхса усрама профессилĕ работниксем нумай кирлĕ пулаççĕ. Вăл кадрсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе халĕ строителствăра хĕрӳлĕ ĕç пырать. Канашра кондукторсем, стрелочниксем хатĕрлекен тата Шупашкарта квалификацине ӳстермели курссем ĕçлеççĕ. Кондукторсен курсĕнче 25 çын, стрелочниксен курсĕнче 16 çын вĕренет. Курссенче вĕренекенсенчен нумайĕшĕ чăвашсем, малтан строителствăра ĕçленĕскерсем.

Строителствăра стахановла ĕçлекенсене чылайĕшне ответлă вырăнсене куçарнă. Кондуктор пулнă Молотов йулташа станцăри дежурнăй, Васильев кондуктора 91-мĕш километрти разйезд начальникĕ тунă. Стрелочник Петров йулташа Трак разйезĕнче дежурнăй пулса ĕçлеме куçарнă. Никифоров рабочи хăй тĕллĕн вĕреннипех станцăри дежурнăй пулса ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Халĕ ăна Трак разйезĕн начальникĕ пулса ĕçлеме куçараççĕ.

Ответлă вырăнсене куçарнă çынсем, хăйсен çĕнĕ ĕçне çине тăрса вĕренсе пынипе пĕрлех, производствăра та лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Кадрсем хатĕрлесси пуринчен ытларах вырăнти çынсене вĕрентес йенĕпе пулса пымала. Анчах районсенчи партипе совет организацисем ку ĕçе тивĕçлипе хакламанни чăрмантарать. Ишлейпе Шупашкар районĕсем ку тарана çитсе те курссене вĕренме йама çынсем уйăрса паман.

„Пионер“ колхоз примерĕ

ÇĔРПӲ. Кăшаркассинчи „Пионер“ колхоз чукунçул строителствинче тăрăшса ĕçлет. Халĕхи вăхăтра ку колхозран строителствăра 50 çын ĕçлеççĕ.

Социалисăмла ăмăртува сарса йанă май колхозниксем кашнийех нормăсене 120-шер процент тултарса пыраççĕ. Уйрăмăнах ĕçе П. Йефимов, М. Иванов тата К. Крупков йултăшсен бригадисенче лайăх йĕркеленĕ. Бригадирсем хăйсем пример кăтартса пыраççĕ.

Н. Окунев.

Кану вăхăтĕнче

Епĕр хамăр бригадăра „ЧАСС Республикĕн Верховнăй Советне суйламалли Положенине“ вĕренме тытăнтăмăр. Ку тĕлĕшпе пирĕн йатарласа организациленĕ кружок ĕçлет. Занятисене хамăр бригадăра ĕçлекен стахановец Максимов йулташ иртерет.

С. Тарасов.

Пирĕн ĕмĕтсем

Епĕ чукунçул строителствинче ĕçлеме пуçланăранпа çичĕ уйăх çитет ĕнтĕ. Çак хушăра манăн пурнăçра, çавăн пекех пĕтĕм строителствăра питех те пысăк улшăнусем пулчĕç.

Малтанхи вăхăтра епĕр ĕç техникине пĕлмен пирки начар ĕçлеттĕмĕрччĕ. Кайран, ĕç йĕркине вĕренсе пынă май, ăнăçлăн ĕçлеме пуçларăмăр. Халĕ манăн 18 çынтан тăракан бригадă Чижов инженер меслечĕпе çирĕплетнĕ кашни 650 метр тăршшĕ линийе пĕр сехет те аллă минутра вырнаçтарса пырать. Пилĕк уйăх кайарах ку ĕçе епĕр виçĕ сехет хушшинче çеç тума пултарнă.

Ĕç йĕркине вĕренсе çитмен, ĕçлеме хăнăхман пирки простойсем те пулаччĕç. Халĕ ĕнтĕ тек простойсем пулмаççĕ. Хамăрăн ĕçе епĕр вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса пыратпăр. Çапла ĕçлени пире стахановец йатне илме тивĕçе кăларчĕ. Пире ĕçре тата пурнăçра Кудисов маçтăр пулăшу нумай пачĕ.

Бригадăри ĕçе тĕрĕс организацилени, пĕр-пĕринпе йаланах килĕшсе ĕçлени тата ĕçе йуратни бригадă членĕсене ӳсме май пачĕ. В. Илдерков, Н. Игнатйев, Н. Тимофейев тата ытти йултăшсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе куллен ӳсĕмсем туса пыраççĕ. Вĕсем производствăра пысăк ăсталăхпа ĕçлеме вĕреннипе пĕрлех хăйсен политикăла пĕлĕвне те ӳстереççĕ. М. Иванов йултăш производствăра пысăк тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Вăл халĕ комсомола кĕчĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пирĕн ĕçсене хакласа Илдеркова, Фаскудинова тата мана çĕршер, текĕпе, А. Григорйева 75 тенкĕпе парнелерĕ.

Кун хыççăн епĕр хамăр ума тата та лайăхрах ĕçлесе малти вырăна тухас задачăна лартрăмăр. Панă сăмаха пурнăçа кĕртессине епĕр шанатпăр. Пирĕн ăна пурнăçа кĕртме пĕлӳлĕх те, хастарлăх та çителĕклĕ.

Анчах пĕтĕм строителствăри ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменни пысăк чăрмав кӳрет. Иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ виç кĕтеслĕ линисене пĕр-пĕринпе сыпма кирлĕ винтăсем тупса памаççĕ. Час-часах çунтармали йапаласем пулман пирки трактор ĕçлемест. Вара пĕтĕм ĕç чарăнса тăрать.

Епĕр чукунçула хăвăртрах туса пĕтерессишĕн тăрăшатпăр. Строителствăри çитменлĕхсене пĕтерсен, манăн бригадă татах та пысăк хăвăртлăхсемпе тата лайăх пахалăхпа ĕçлеме пултарать. Чукунçул строителствинчи руководителсен вăхăта вăраха йамасăрах ĕçре чăрмав кӳрекен çитменлĕхсене пĕтермеле.

Бригадир — Пушков.

К Ĕ П Е Р

Айлăмра ларакан Михайловкă йалĕ çулталăк кайарах Мăн Çавал тăрăхĕнчи йалсем хушшинче нимĕнпе те паллă пулман. Унта, кӳршĕри йалсенчи пекех, йăвăç çуртсем пулнă. Палтан инçех мар Мăн Çавал шывĕ хумханса йухнă.

Михайловкă йалĕ халĕ те нумайах улшăнман, анчах йал вырнаçнă айлăмăн сăн-сăпачĕ пĕтĕмпех улшăннă вара. Кунта халĕ кашни кун хĕрӳлĕ ĕç пырать.

Авă вăрман хĕрринче тракторсем кĕрлеççĕ. Вăрăм пĕренесене пулас кĕпер патнелле туртараççĕ. Унсă шывĕпе Мăн Çавал шывĕсем хушшинчи сăрт хысахĕнче строителсем хĕрӳлĕн ĕçлеççĕ.

Айалта, Мăн Çавал шывĕн пăрĕ çинче, бригадăсем ăмăртаççĕ. Вĕсем чукунçул тăрăх утмăл тоннă тайакан кĕпер фермине малала шутараççĕ. Пĕри теприне чăрмантармасть. Кашни хăйĕн ĕçне тăвать. Пĕрисем çĕклеççĕ, теприсем туртаççĕ. Пурин вăйĕ те пĕрлешнипе пулнă пысăк вăй йăвăр фермăна малала та çӳлелле шутарать.

Акă, комсомолец Семен Тарасов йертсе пыракан бригадă членĕсен ушкăнĕ. Вĕсен ушкăнĕнче сухаллă çынсем пĕкĕн çеç, ыттисем пурте çамрăксем—маттур йĕкĕтсем. Ку бригадăн чаплă историйĕ Канашпа Шупашкар хушшинче лини хывма пуçланипе тачăн çыхăнса тăрать. Семен Тарасов строителствăра тăхăр уйăх кайарах ĕçлеме тытăннă.

Малтанхи километр хушшинче лини хывнă вăхăтра Семен Тарасов Пульхин бригадипе ăмăрту договорĕ çырать. Пульхин бригадинче строителствăра ĕçлесе хăнăхнă, ĕçе вĕренсе çитнĕ çынсем тăнă. Йалсенчен анчах килнĕ, чукунçул хывнă çĕрте нихăçан та ĕçлесе курман çынсенчен тăракан Тарасов бригади çав ăста çынсемпе пĕртан ĕçлеме пулни нумайĕшне хумхатнă.

— Пикенеççĕ çав. Пульхин бригадипе ăçтан танлашчĕр вĕсем,—тенĕ хăш-пĕрисем.

Анчах ку сăмахсем нумайа пыман, вĕсене икĕ вунăкунлăхри ĕçсемех пăрахăçа кăларнă. Бригадăра пĕтĕм ĕçе пысăк ăсталăхпа йĕркеленĕ хыççăн Тарасов бригади куллен-кун ӳссе, çирĕпленсе пынă, ĕçре пысăк ӳсĕмсем тунă. Часах бригадă стахановла бригадă йатне илме тивĕçе тухнă. Çĕнĕрен те çĕнĕ ĕç меслечĕсемпе хĕçпăшалланса пынă.

Бригадă аллă виçĕ километр хушшинче лини хывнă вăхăтра линийе Чижов инженер меслечĕпе хывма вĕренсе çитнĕ. Кĕçĕн Çавал шывĕ урлă кĕпер фермисене лартнă чухне фермăсем лартас ĕçе алла çавăрса илнĕ. Çав опытсемпе ĕçлесçĕ пайан Тарасов бригади членĕсем: Максимов, Йевдокимов, Колбасов тата пĕр тăвансем: Павел Иванов, Константин Иванов тата Семен Иванов йултăшсем.

Нумай ĕмĕтсем çуралаççĕ стахановла ĕçре. Тарасов бригади членĕсем хăйсен пĕлĕвне ӳстерессишĕн хыпăнаççĕ. Пĕрисем чукунçула туса пĕтернĕ хыççăн кондуктор пулса ĕçлеме вĕренме ĕмĕтленеççĕ, теприсем машинис, кочегар пулассăн. Кашни çамрăкăн пысăк ĕмĕт. Çамрăксен çеç мар, пур рабочисем те хăйсен квалификацине ӳстерсех пыраспăн.

Лини хывма купаланă тăпра тĕми хĕрринче ĕçлекен Пушков бригади членĕсем—стахановецсем: Илдерков, Игнатйев, Григорйев, Тимофейев тата ытти йултăшсем тахçантанпах куçса çӳрекен хĕрлĕ йалава илесси çинчен ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем кашни хăйĕн ĕçне тĕплĕн вĕренсе çитнĕ.

Тарасовпа Пушков бригадисен опычĕпе ĕçлесе ӳссе пыракан Ксени Рубцова бригадин ĕçĕнче те вĕсем стахановла ĕçлессишĕн тăрăшни—Чăваш республикин хуçалăхне çĕклес, пуйанлăхне хăпартас çулпа малала çирĕп утăм туни пулнине лайăх ăнланса илни курăнать.

Кунтах машинăлă станцăри Николенков бригади ĕçлет. Рабочисен ĕçри тата пурнăçри йултăшĕ маçтăр Михаил Козлов ĕç ăнăçлăн пынипе хавасланса пĕр ушкăн патĕнчен тепĕр ушкăн патне çӳресе кăтартусем парать.

Икĕ кун хушши пысăк тимлĕхпе ĕçленĕ хыççăн, бригадăсем фермăсене вырнаçтарса çитерчĕç. Ĕмĕрсерен йухса выртнă Мăн Çавал шывĕ урлă чукунçул хывма çул уçăлчĕ.

Кусем тумали ĕçсен пайне пурнăçа кĕртни çеç пулаççĕ-ха. Халĕ Унгă шывĕ урлă кĕпер хывасси тата хĕрĕх пилĕк километр ытларах лини хывасси туса тăрать. Ку çеç те мар. Строителствăри пĕр прорабăн кабинетĕнче тата пысăк ĕçсен планĕ выртать. Чукунçула хута йарсан, ăна пăхса усрама, унпа усă курма станци начальникĕсем, машинисcем, кондукторсем, кочегарсем, стрелочниксем, маçтăрсем, слесарсем т. ыт. нумай профессилĕ работниксем кирлĕ. Канашпа Шупашкар хушшинче пойăссем çӳретес, таварсем турттарас ĕçе ăнăçлăн пурнăçлама ĕçе пысăк пахалăхпа организацилени кирлĕ.

Тата тепĕр кун иртрĕ. Мăн Çавал урлă сутă çул—чукунçул чăсăлса выртрĕ. Вăл çулпа пирвайхи хут çуркуннехи хĕвел пайракисемпе йăлтăртатса тăракан паровоз хуллен каçма тытăнчĕ.

Чăтăмлă кĕпер. Пĕр шикленмесĕрех çӳрĕпĕр...

Мак. Титов.

Ситменлĕхсене пĕтерес пулать

Тухăçлă ĕçлесси ĕçе тĕрĕс организациленинчен килет. Виççĕмĕш участкăри руководителсем çавна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымаççĕ-ха. Ĕçре çирĕп йĕрке туманнине пула час-часах пысăк, пĕтĕм ĕçе чăрмантаракан ситменлĕхсем те пулаççĕ. Акă бригадăсене уйрăм ĕçсене тума вырнаçтарассинех илер.

Халĕхи вăхăтра пĕр бригадă та ыран мĕнле ĕç тумали çинчен пĕлмест. Çавăн пекех ĕнер мĕн чухлĕ ĕçлени çинчен те никам та каласа памасть. Çапла вара мĕн ĕçленине тата мĕнле ĕçленине пĕлмесĕрех ĕçлетĕн. Кунашкал пулни стахановла йухăма вăйлатса пыма чăрмантарать. Мĕншĕн тесен хамсемпе танлашса ĕçлемели пур пулсан та, вĕсен ĕçĕсем çинчен рабочисем пĕлмеççĕ.

Рабочисем хушшинче культурăлă-массăлă ĕçе туса пырасси те çителĕксĕр. Пухусем пулмаççĕ. Рабочисемпе пĕрле пухăнса кирлĕ ĕçсем çинчен сӳтсе-йавасси сайра хутра çеç пулать. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех участкăри руководителсем тата профсойуз организацийĕ массăпа çыхăнса ĕçлемении çине кăтартса парать. Чукунçул çинче ĕçлеме тытăннăранпа, сакăр уйăх хушшинче, епĕ начальниксем рабочисемпе пĕрлешсе каласнине сахал куртăм. Килеççĕ те кайаççĕ. Анчах рабочисем мĕнле пурăннипе интересленмеççĕ.

Участкăра суту-илӳ ĕçне начар йĕркеленĕ. Ларйоксем йĕркелĕ ĕçлемеççĕ. Кирлĕ таварсем сахал пулаççĕ. Кун пирки питех те нумай калаçнă, анчах калаçни калаçнипех йулать. Чăвашсойуз та, районсенчи кооперативсем те ку ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ.

Рабочисем чукунçул хывассине çав тери йуратса ĕçлеççĕ. Кашни хăйĕн ĕçне вăхăтра тата лайăххăн пурнăçласшăн. Акă пирĕн бригадăри Колбасов, Зайцев, Максимов йултăшсем кунсерен ӳсĕмсем тăваççĕ. Вĕсем нормăна йаланах ирттерсе тултараççĕ.

Епĕр хамăр бригадă умне чукунçулне туса пĕтеричченех стахановла ĕçлесе пырас задачăна лартрăмăр. Çавăнпа пĕрлех руководителсенчен пире стахановла ĕçлеме условисем туса пама ыйтатпăр.

М. Йевдокимов.

Радио итлесси анлăн сарăлса пырать

Трак. Районри колхозсенче радио тăрăх паракан çĕнĕ хыпарсене итлесси анлăн сарăлса пырать. Çав вăхăтрах радио ĕçĕпе интересленекенсен—радио тусĕсен—йышĕ те хутшăнса пырать.

Ф. Степанов йултăш тăрăшнипе Мартынкасси йалсоветĕнчи 5 колхозра радио кĕртнĕ, 35 вырăнта радио итлемеле тунă.

Мартăн 8-мĕшĕнче Мускавран панă радиохыпара районĕпе 830 çын итленĕ. Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ пынă вăхăтра панă хыпарсене колхозниксемпе йединоличниксем тимлĕн итлесе пычĕç.

Район центрĕнче радиоузел çуртне туса пĕтернĕ, радиоапартсене илсе хатĕрленĕ. Анчах республикăри радиокомитет репродуктор, пралук тавраш ĕсем паманнипе ĕç чарăнса тăрать-ха.

Закамский.

Радиолекцисене итлессине йĕркелемеле

Массăлă заочнă вĕренӳ институчĕн чăваш уйрăмĕн Шăхасанти ленинисăма вĕренекенсен группинче пилĕк кунлăх занятинче „Диктатура пролетариата“ темăна вĕренчĕç. Конференци активлă иртрĕ. Темă тăрăх кашни вĕренекен виçтăват хут тухса калаçрĕç. Нумайĕшĕ занятине аван хатĕрленсе пыни куранчĕ. Группăра вĕренӳ пахалăхĕ ӳссех пырать, — зачот панă чухне начар паллă илни никам та пулмарĕ.

Анчах вĕренӳ ĕçĕнче халĕ çитменлĕхсем те нумай-ха. Хăшпĕрисем (Горбунов, Салейев) занятисене çителĕклĕ хатĕрленсе пымаççĕ. Хăш-пĕрисем тата кăтартнă литературăна вулаççĕ, анчах çителĕклĕ ăнланаймаççĕ, вĕсене вальли консультаци организацилемен. Радио лекцисене итлессине те йĕркелемен-ха.

Çав çитменлĕхсене халех пĕтерме кирлĕ.

Соколов.

Çуртри уйĕнчи ĕçсем çинчен. Çуртри уйне сухаласа сӳрес ĕçсем пирĕн çителĕклĕ пулса пымаççĕ. Кĕрхи тĕштырăсене вырса кĕртнĕ хыççăн, кĕр сухи умĕн хăмăл сухи (лущение) сахал колхозсенче тăваççĕ. Малашне ку ĕçе кашни колхозрах тумала.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç нумай çĕрте пит кайа йулать—нойабĕр уйăхĕ пуçланиччченех тăсăлса пырать. Кĕрхи çĕртме сухине çентăбĕрĕн 20-мĕш тĕлне пĕтермеле. Çапла тусан çеç кĕркуннехи нӳрĕне тăпра ăшĕнче ытларах тытса йулма пулать.

Кĕрхи тырăсене акмали уйсенчи ĕçсем. Калас пулать, пирĕн Чăваш республикинче кĕрхи тырăсене акмали уйсенчи ĕçсене кирлĕ таранах тумаççĕ-ха. Кĕрхи хура çĕртме сухине пит сахал çĕрте тăваççĕ. Хура çĕртмене ытти тĕрлĕ çĕртме сухисемпе танлаштарсан, вăл çумкурăксемпе кĕрешес ĕçре, тăпра ăшĕнчи нӳрĕке тата калчасене ӳсме кирлĕ апатсене ытларах хатĕрлес тĕлĕшпе пуринчен малта тăрать.

Пур çĕртмене те малтанхи хут та, иккĕмĕш хут та вăхăтра сухаласси çине тата хăмăл сухисем вăхăтра тăвасси çине те уйрăмăнах çавăрăнса пăхмала.

Çĕртме сухине кайа йулса тăвассине пĕтĕмпех пăрахăçа кăлармa вăхăт ĕнтĕ.

Çĕртме сухисене епĕр калана пек вăхăтра тăвас ĕçе вылăх кĕтмели вырăн пулманни чарса тăма пултараймасть. Вылăх апачĕн ыйтуне урăх майсемпе татса памала, вăл ыйту тăрăх ĕçе пусуçавăрнăш тĕрĕс йĕркелесси çинчен партипе правителствă йышăннă постановленире кăтартнă пек организацилемеле.

Нумай çул ӳсекен курăксем çĕре кĕрпеклентереççĕ, çав май пулах, курăксем хыççăн тырпул лайăхрах ӳсет. Нумай çул ӳсекен курăксенчен клевĕрпа люцернă пеккисене çеç мар, тата тимофейевкă та акса тумала.

Чăваш республикинчи колхозсенче клевĕрпе люцернăна тимофейĕвкăпа хутăш акса тума вăхăт ĕнтĕ. Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн кашни районрах малта пыракан колхозсенче уйрăм участкăсем çине вăрлăхлăх тимофейĕвкă акса хăварма хушмала.

Чăваш республикинчи хура çĕр çинче клевĕр çитĕнмест тенĕ шухăшсем халĕ те пĕтмен-ха. Ман шутпа, ку тĕрĕс мар. Патăрйел районĕнчи „Трактор“ колхозра иртнĕ çулхи çуркунне тулă çине акнă клевĕр лайăх шăтса тухрĕ тата йур айне те лайăх кĕчĕ.

Хура çĕр çинче клевĕр тăпрана извĕçлесен татах та ăнăçлă пулать. Клевĕрпе тимофейевкă хутăш хура çĕр çинче те акмала.

Тăпрана извĕçлени тăпрана кĕрпеклентерет тата тырпулсене ӳсме кирлĕ йапаласене тăпра ăшăнче пухма нумай пулăшать.

Чăваш республикинчи нумайĕш тăпрасене, вĕсенчен хура тăпрасене те, извĕç çитмест. Çавăнпа та кăçалтан пуçласа пирĕн уй-хирсене извĕçлес ĕçе массăлăн тытăнмала.

Çакна тăвас тесен, нумай çул ӳсекен курăксене пĕрчĕлĕ тырăсемпе хутăш акмали çĕр лаптăкĕсене кашни çулах извĕçлесе пымала.

Тăпрасене хăйăрлассипе тăмласси. Чăваш республикинче тăмран пулнă хура тăпрасем, вăрман уй тăприсем, кĕллĕ тăпрасем ытти тĕрлĕ тăпрасенчен нумайрах. Опытсем кăтартнă тăрăх, çав тăмлă тăпрасене хăйăр тăкса сухаласан тырă лайăхрах пуласси курăнса тăрать. Тĕслĕхрен, Вăрнар районĕнчи çĕнĕ Йахакасси йалĕнчи колхозра 1937 çулта гектар çине 50 тоннă хăйăр тăкса сухаланă вырăнта викă тухăçĕ 7,5 центнер (14 процент) ытла, 200 тоннă тăкнă вырăнта—47,5 центнер (90 процент) ытла пулнă. Улатăр районĕнчи Уварово йалĕнчи колхозра 50 тоннă хăйăр тăкса сухаланă вырăнта ыраш тухăçĕ 3 центнер (17 проц.) ытла пулнă. Опытсем кăтартнă тăрăх пĕр хут хăйăр тăкнин усси çултан çула пырать.

Тăмран пулнă тăпрасемпе йунашар хăйăрсем пулсан, колхозсен туртăм вăйĕ çитнĕ таран тăмлă тăпрасене хăйăрлама тăрăшмала. Кашни гектар çине 50—100 тоннă хăйăр кăлармала.

Хăйăрлă тăпра çинче те тырпул туса илеççĕ. Çавăн пек тăпра çинче тырпул тухăçне ӳстермели майсенчен пĕри вăл—хăйăрлă тăпра çине тăм кăларса хутăштарни пулать. Гектар çине 50—100 тоннă тăмлă йушкăн тата мергел тăкса сухалама тăрăшмала.

Тăпрасем йухса кайнине хирĕç кĕрешесси. Чăваш республикинче тайлăм вырăнсем пит нумай. Çав вырăнсенче тăпран çийелти сийĕ çултан çула çăмăр йе йур шывĕпе йухса пĕтсе пырать. Çавă пит сийенлĕ. Çавăнпа пĕрлех тип çырмасем те хутшăнсах пыраççĕ. Вăл та йалхуçалăхĕшĕн пит сийенлĕ. Малашне йалхуçалăх специалисĕсен çав ыйту çине пит тимлĕн çавăрăнса пăхмала. Тип çырмасем пулнине тата тăпра йухса кайнине хирĕç кĕрешес ĕçре вĕсен колхозсене пулăшу парса пымала.

Çырмасенче пĕвесем туса шыв тытса тăрас ыйту та тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре пысăк вырăнта тăрать.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ. Ӳкерчĕк çинче: Китайри 8-мĕш нацилĕ революцилĕ çарĕн артиллерисĕсем фронтра (Çурçĕр Китай).

(Союзфото).

Испанири фронтсенче

Испанин оборона министерстви пĕлтернĕ тăрăх, пăлхавçăсен хăйула атакине пула республиканцăсен çарĕсен Каспе тата Альнориса (Монтальбаноран çурçĕр хĕвелтухăç йенче) хăвармала пулчĕ. Альнанисаран Морельйана пыракан çулăн районĕнче хайар çапăçусем пулса иртрĕç. Пăлхавçăсен пур атаккисене те республиканцăсем çĕмĕрсе тăкнă.

Ытти фронтсенче лару-тăру ним те улшăнман.

* * *

Испанин оборона министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Германипе Итали лотчикĕсем тытса пынипе ĕçлекен, Италипе Германи самольочĕсем йулашки икĕ кун хушшинче Барселона çине темиçе хут та тапăнса, хулана калама çук хăрамала бомбардировка туса иртернĕ. Нумай çуртсене аркатнă. Пин çын ытла вĕлернисем тата нумай аманнисем шутланаççĕ.

* * *

Испанин оборона министерстви мартăн 18-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, хĕвелтухăç фронтĕнчи секторсенче вăрçă ĕçĕсем ытти кунсенчи пек мар вăйсăртараххăн пулса пынă. Республика çарĕсем Берхе йенче пăлхавçăсен темиçе атакине сире-сире йанă.

Ытти фронтсенче—улшăнусем çук.

* * *

Мартăн 17-мĕшĕнче 23 сехетрен пуçласа мартăн 18-мĕшĕнчи 23 сехете çитиччен фашиссен авиацийĕ Барçелона çине çичĕ хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Тапăнасса Италипе Германи самольочĕсем тапăннă. Йулашки икĕ кун хушшинче сывлăшран бомбăсем пăрахнипе хулара 1.300 çын вилнĕ тата 2.000 çын аманнă.

Аманнисен шутĕнче—Францин Барçелонăри генеральнăй консулĕ те пур. Бомбăсем пăрахнипе амanса Францин вице-консулĕ вилнĕ.

(ТАСС).

Республикăлă Испанире. Ӳкерчĕк çинче: Интернационаллă бригадăн штурмăлă ротин боецĕсем Альбасете урамĕнче.

(Союзфото).

Колхоз театрĕ Çĕмĕрле районĕнче

Чăвашсен 3-мĕш колхоз театрĕ мартăн 9-мĕшĕнче П. Осиповăн „Айдар" драмипе пĕр уйăхлăха Çĕмĕрле районне пычĕ. Çĕмĕрлере, Турханта, Хутарта театра курма 500—600 çын пыраççĕ. Хăшпĕр колхозсем драмăна икĕ хут лартма ыйтаççĕ. Театр çитес кунсенче „Большевик", „Комбайн", „Коминтерн", „Çиçĕм", „Çĕнĕ пурнăç", „Çамрăк вăй" тата Буденный йачĕпе тăракан колхозсенче пулать.

Режиççор В. Михайлов.

Суд хроники

ЙЕТĔРНЕ. Йадринори тулли мар вăтам шкулта вĕрентнĕ П. Йатрушов пĕрмайах тулашса пурăннă. Вăл ачасене йуратман. П Йатрушов вĕренекен ачасене чылайĕшне хĕненĕ. Çапла вăл ачасене вĕрентес вырăнне, хулиганла ĕçсем тунă. Йатрушовăн ĕçĕсене çак кунсенче Йетĕрнери халăх сучĕ пăхса тухрĕ, ăна пĕр çулталăк та 6 уйăх хушши вăхăта тĕрмене хупса лартмала турĕ.

Ник. Цветков.

Китай çарĕсен пысăк çĕнтерӳвĕ

ХАНЬКОУ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Таньцзинь—Пукоу чукунçул патĕнчи фронт командуйушчийĕ генерал Ли Цзун-Жень телеграфпа пĕлтернĕ тăрăх, Шаньдунь провинцин хĕвелтухăç пайĕнче Китай çарĕсем Йапони çарĕсен вунă пин çынлă ушкăнне вăрçăра калама çук хыттăн çĕмĕрсе тăкнă. Йапони çарĕсен çав ушкăнĕ Гаоми патĕнчи шоссе-çулĕ тăрăх Чжучен урлă Линь-И йатлă хула çине тапăнса пынă, ăна Çуйчжоуран (Таньцзинь—Пукоу тата Лунхай чукунçулĕсем пĕрлешнĕ çĕрти стратегилĕ пункт) çурçĕрпе хĕвелтухăç йенчен пырса атакăлама хăтланнă.

Китай çарĕсем çĕмĕрсе тăкнă йапонцăсем кайала ним йĕркесĕр тараççĕ. Китай çарĕсем çурçĕрелле наступлени туса пыраççĕ. Мартăн 18-мĕшĕнче Китай çарĕсен чаçĕсем Таньтоучжень патне (Линь-И йатлă хуларан 30 километр çурçĕрелле) çитнĕ. Линь-И районне Йапони отрйачĕсенчен пĕтĕмпех тасатнă. Çапăçнă чухне Китай çарĕсем йапонцăсенчен çар хатĕрĕсем нумай туртса илнĕ.

Çакă пысăк çĕнтерӳ тума Китай çарĕсене Шаньдун провинцинче вăрçакан партизансен отрйачĕсем пысăккăн пулăшнă.

Фашиссем Барçелона çине 16 хутчен бомбăсем пăрахнă

ПАРИЖ, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). Италипе Германи авиацийĕ 36 сехет хушшинче Барçелона çине 16 хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Каталони правительствин пуçлăхĕ Компанис интервентсен çав нихăçан илтмен варварла ĕçĕсене пĕтĕм цивилизацилĕ тĕнче умĕнче протесленĕ. Компанис çапла пĕлтернĕ: Каталони халăхĕн çирĕплĕхне тата унăн интервентсене хирĕç тăрас ирĕкне интервентсен нимĕнле преступленийĕсем те куçаймĕç,—тенĕ.

Кĕскен

◆◆ Польшăпа Литва хушшинчи лару-тăру çивĕчленнĕ май, Польшăра перекетлеме хунă укçасене массăллăн кайала илеççĕ. Варшавăри перекет кассисем умĕнче пысăк черетсем тăсăлса тăраççĕ, вкладчиксем хăйсен укçисене кайала илеççĕ.

◆◆ Испанири пăлхавçăсем Ель Ачо (Испани Марокки) тĕрминче 52 çынна персе пăрахнă. Персе вĕлернисем хушшинче республика çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсем тимиçе çын та пур.

◆◆ Мексикăн Лига наци çумĕнчи йаланхи делегачĕ хăй правительстви хушнипе Австри республикине пусмăрланине хирĕç тухса каланă. Мексика правительствин пĕлтерӳвĕнче çапла каланă: Германи интервенчĕсем Австрин никама пăхăнса тăмасăр пурăнассине пĕтерни—Лига наци пактне тата пĕтĕм тĕнчери права принципĕсене çĕмĕрни пулать,—тенĕ.

(ТАСС).

Ĕçйалкорсен канашлувĕ

СĔНТĔРВАРРИ, (телефон тăрăх). Мартăн 19-мĕшĕнче ĕçйалкорсен тата стена хаçат редакторĕсемпе редколеги членĕсен районри канашлувĕ пулса иртрĕ. Канашлура ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнче пулнă пленум решенине мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен, суйлав вăхăтĕнче тата РСФСР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленес ĕçре стена хаçачĕсем умĕнче мĕнле задачăсем тăни çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Тухса калаçакансем пурте райхаçат редакцийĕ ĕçйалкорсемпе тачăн çыхăну тытмаст, ĕçйалкорсене кирлĕ пек ĕçлеме вĕрентмест, вĕсене политикăлă воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет, тесе хытă критиклерĕç.

А. Сатур.
В. Сидйаков.

Трактор паркне йусани

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сведенийĕсем тăрăх, мартăн 15-мĕш тĕлне Совет Союзĕнчи машинă-тракторлă станцисенче 232 814 трактор йусанă. Тракторсене йусас плана 90 процент тултарнă. Йулашки пилĕк кунлăх хушшинче тракторсене йусас план 3 процент çеç хушăннă.

(ТАСС).

Хроника

◆◆ ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **М. И. Целищчев** йулташа Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

◆◆ ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **П. П. Кучеренко** йулташа Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Пулни-иртнисем

✪ Кăсйерен укçа тата документсем вăрласа пурăннăшăн çак кунсенче Шупашкар хулинчи уголовнăй розыск А. П. Смирнова, Н. Н. Рейца, А. М. Кириллова тата В. А. Александрова арĕслесе суда панă. Йулашки икĕ уйăх хушшинче çав вăрăсем Шупашкарта 19 çынна çаратнă.

✪ Шупашкарти „Красный молот" ертелре ĕçленĕ Н. Рубцов Колхознăйа урамри 27-мĕш №-лĕ çуртра хватерто пурăннă чух пĕрле пурăнакан çынсен йапалисене йаланах вăрланă. Çавăн пек вăл хром атă, кĕпе-йĕмсем тата укçасем вăрланă пулнă. Çак кунсенче ăна вăрланă çĕртех тытнă.

20 пин салтак пĕтнĕ

ТОКИО, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). „Джапан Адвертавзер" йатлă хаçат çапла пĕлтерет: Йапонин çар министрĕ Сугийама парламентра официаллă ыйтнă май, Шанхай патĕнчи çапăçусенче Йапони салтакĕсем 20 пин çын пĕтнĕ,—тесе çирĕплетсе панă.

Йапони авиацийĕ тапăнни

Ханькоуран пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 17-мĕшĕнче Йапонин 56 самольочĕ Наньчан йатлă хула çине (Цзйанси провинцин тĕп хули) 100 бомба ытла пăрахнă. Виçĕ çын вилнĕ, 5 çын аманнă. 9 çурта ишĕлтерсе антарнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Йапонин 9 самольочĕ Цзиань йатлă хула патĕнче (Цзйанси провинци) 20 бомба пăрахнă.

Мартăн 17-мĕшĕнче йапонцăсем Аньцин йатлă хула çине (Аньхуей провинцин тĕп хули) тапăннă. Йапонин 17 самольочĕ хула çывăхне темиçе бомба пăрахнă.

Йапонин 48 самольочĕ Кантон тавринче чукунçул станцисем çине бомбăсем пăрахнă.

(ТАСС).

Германи льотчикĕсем Йапонире

ШАНХАЙ, мартăн 19-мĕш. (ТАСС), Шанхайа, йапонцăсем патне нимĕç льотчикĕсем 50 çын çитни çинчен пĕлтереççĕ. „Домейваньбао" йатлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çитес çывăх кунсенче вĕсене çурçĕрти фронта Китай çарĕсене хирĕç çапăçма Йапони çарĕсем патне ăсатаççĕ.

Вĕсемпе пĕрле Германирен 40 бомбовоз çитнĕ.

Йапони 9 державă пактĕнчен тухать

ТОКИО, мартăн 19-мĕш. (ТАСС). Мартăн 18-мĕшĕнче кĕçĕн палатăн бюджет комиççи ларувĕнче Сейукай партин депутачĕ Насиока Йапони правительствине 9 державă пактĕнчен тухма ыйтнă. Çавăнпа пĕрлех Насиока Йапонине Ĕçĕн пĕтĕм тĕнчери бюровĕнчен тата Гаагăри трибуналтан тухма ыйтнă. Çак требованисем пирки панă хăйĕн ответĕнче Хирота çапла каланă: „Йапони, паллах, Китай пирки тунă 9 державă пактĕнчен тухать. Анчах та правительствă çакна валли майлăрах вăхăт кĕтет"—тенĕ.

Мадрида çимĕçсем илсе пынă

Çак кунсенче Мадрида Швецирен республикăлă Испанийе пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет делегацийĕ çитнĕ. Делегаци çимĕç илсе пынă, ăна Швецири ĕççыннисем хушшинче пухнă укçатенкĕпе илнĕ.

Китайри вăрçă

Китайран пĕлтернĕ тăрăх, йулашки кунсенче Шаньси провинцинче (Çурçĕр Китай) Китай çарĕсен позицийĕсем самайах лайăхланнă. Китай çарĕсем кунта 250 пин çын. Вĕсем йапонцăсем çине йăнăçлăн контрнаступлени туса пыраççĕ. Йапонин 5.000 салтаклă колонни, китайцăсем хыттăн хĕснипе, Чжендин—Тайуань чукун çул районĕнчен Таййуань йенеле чакать. Китай çарĕсем йапонцăсенчен Чжанцы йатлă хула туртса илнĕ.

Шаньси провинцин кăнтăр пайĕнче Йапони çарĕсем халĕ те Хуанхе йуханшыв патĕнчен çурçĕрелле чакса пыраççĕ.

Шаньсипе Хебей провинцийĕсенче 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕ йапонцăсен тылĕнче çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем туни çинчен пĕлтереççĕ. Мартăн 10-мĕшĕнче Хебей провинцинче Китай çарĕсем Фупин йатлă уйес хулинчен (Баодинран хĕвеланăçнеле) Йапонин вунă пин салтаклă гарнизонне хăваласа кăларса йанă. Çапăçусем вăхăтĕнче йапонцăсен 20 танк ытла пĕтнĕ.

Таньцзинь — Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче çапăçусем йулашки виçĕ кун хушшинче вăйланнă.

Мартăн 17-мĕшĕнче Йапони çарĕсем Ичжоуран çурçĕрелле Китай позицисем виçĕ йенчен наступлени тунă. Виçĕ сехет хушши штыксемпе çапăçнă. Китайцăсем хăйсен позицийĕсене сыхласа хăварнă. Икĕ йенче те вилнисем нумайăн шутланаççĕ.

Вăтам Китайра йулашки кунсенче Китайăн регулярлă çарĕсемпе партизансен отрйачĕсем активлăн вăрçни палăрать. Чунде районĕнче (Ханчжоуран çурçĕрелле) партизансемпе Йапони чаçĕсем хушшинче çапăçусем пыраççĕ. Партизансем кĕтмен çĕртен атакăсем туса йапонцăсене пысăк сийен кӳреççĕ. Мартăн 12-мĕшпе 18-мĕш хушшинче Фуйан районĕнче кăна йапонцăсене икĕ пин çын ытла вĕлернĕ. Уху районĕнче халĕ те пысăк çапăçусем пыраççĕ.

(ТАСС).

Осоавиахимăн XII-мĕш лотерейĕ

ССР Союзĕн Осоавиахим Тĕп Совечĕ массăллăн сарма Осоавиахим лотерейĕн билечĕсене кăларать. Ку лотерейра 12 мĕлйун тенкĕлĕх 807.722 выльав пулать.

Выльавсен хисепĕнче—„М-1" автомашина 21, пианина 21, 170 мотоцикл, 240 „лейка" фотоапарат, ССР Союзĕ тăрăх çӳремели 336 путевка тата ытти хаклă йапаласем те пур.

Лоторей билечĕсене 1938 çулхи мартăн 20-мĕшĕнчен пуçласа ийунĕн 20-мĕш хушшинче Осоавиахим организацисем сараççĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Государствă Банкĕн Чăваш республикинчи кантурĕнче ĕçлекенсен коллективĕпе администраци кантурта ĕçленĕ

И. М. ЖУРАВЛЬОВ йулташ

нумай вăхăт чирлесе пурăннă хыççăн 1938 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

Местком.
Администраци.

Йăптăх çăма пуçтарăр!

Лашасен тата ĕне выльăхсен йăптăх тăкас вăхăт çитет.

Коньухсем, выльăх пăхакансем, колхозниксем, йединоличниксем тата ыттисем пурте выльăхсем йăптăх тăкнă вăхăта ахаль ан иртерсе йарăр!

Йăптăх çăма пуçтарса çăм хатĕрлекен сойуз складне парăр (складсем кашни район центрĕнчех пур), йалсенче—çăм пухакансене парăр.

Йăптăх çăма тĕсĕн-тĕсĕн уйрăм пуçтарăр:

хĕрлине, шуррине уйрăм, ытти тĕссемпе хутăштармасăр, çавнашкалах пахалăх йенчен тасатса пуçтарăр

Çӳпçаплă çăма йӳнĕ хак параççĕ.

Таса йăптăх çăмшăн çăм хатĕрлекен сойуз çакнашкал хаксемпе килограмшăн тӳлет:

Шурă	Хура	Хĕрлĕ	Ытти тĕссем
Ĕне çăмĕ 4—80 Лашан 3—80	Ĕне çăмĕ 4—20 Лашан 3—40	Ĕне çăмĕ 4—20 Лашан 3—40	Ĕне çăмĕ 3—60 Лашан 2—90

Йăптăх çăм промышленнăçа валли хаклă сырйо пулнине асра тытăр!

Çăм хатĕрлекен сойуз.

Академи театрĕнче

Мартăн 21-мĕшĕнче
Вырăсла спектакль
Лавренев
РАЗЛОМ
(4 пайлă)
Режиççор С. С. МАРТАГИН лартать.
Талон № 143.

Чăвашсен Коммунисла йалхуçалăх аслă шкулне

1. Аслă бухгалтер заместителĕ
2. Вăхăтлăх ĕçлеме бухгалтер
КИРЛĔ.

Документсемпе аслă бухгалтер патне пымала.
Адрес: Ленинградскайа урам, 3.

Граждăнсем!

Ерех посудисене ерех магазинĕсене парăр! Посудăсемшĕн укçан тӳлеме ыйтăр.

Ерехсемпе, ликерсемпе сутă тăвакан пур магазинсем те ерех посудисене темĕн чухлĕ пулсан та йышăнаççĕ.

Ерех завочĕн тытăмĕ.
3—3

Шупашкарти кирпĕч заводне
ПЛАНОВИК-ЕКОНОМИСТ КИРЛĔ

Хваттер пур. Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх. Çавнашкалах сезонлă тата йалан ĕçлеме *РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ*
Обшчежити пур.
Дирекци.
3—2.

Чăваш АССР Йуçтици халăх комиссариачĕ йуридически курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Курс виçĕ уйăхлăх пулать, унта нотариус работникĕсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Курса арçынсене тата хĕрарăмсене 23 çулхисенчен 40 çулхисем таран, 7 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Курса вĕренме илнĕ чух малтан 7 çул вĕреннĕ программă тăрăх вырăс чĕлхипе, математика тата обшчествоведенипе испытани тăваççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен Чăваш АССР Йустици халăх комиссариатне зайавленипе пĕрле çирĕплетнĕ автобиографи тата çакнашкал документсене памала:

1. Вĕренни çинчен
2. Миçе çулхине кăтартакан хут
3. Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ хут
4. Судпа айăпланманни çинчен
5. Йулашки вырăнта ĕçленĕ çĕртен отзыв
6. Икĕ фотокарточка
7. Паспорт тата çар билетне хăйпе пĕрле илсе пымала.

Зайавленисене 1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.
Испытанисем апрелĕн 7-мĕшĕпе 9-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ.
Заньати 1938 ç. апрелĕн 10-мĕшĕнче пуçланать.
Испытанине чĕннĕ хыççăн çеç килме йурать.
Курса илнисене стипенди 200 тенкĕ кашни уйăхра парса тăраççĕ, обшчежити пур тата выртса тăмали йапаласем параççĕ.
Адрес: Шупашкар хули, ЧАССР, Хĕрлĕ плошчĕд, № 24.
Йустици халăх комиссариачĕ.
3—1

Чăвашсен Трахом Институтне
Повар помошникĕ
кирлĕ.

Аслă тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă
АГРОНОМСЕМ
Чăваш АСС Республикинчи Вăрлăх сурчĕсене сăнакан участăкĕсенче ĕçлеме
кирлĕ
Ĕçукçи уйрăм хакпа пулать.
Зайавленисене автобиографипе пĕрле çак адреспе йамала:
Шупашкар, Çĕрĕç халăх Комиссариачĕ, Чăваш АССР вăрлăх сурчĕсене сăнакан Инспекцине.

Чуварлейри санаторине
Медицинă ĕçне пĕлекен
сестрасем—4 çын
ТАТА
фармацевтсем кирлĕ.
Ĕçукçи государствă нормированийĕ тăрăх Коммуналă услугăсем пур.
2—1

Чуварлейри санаторине
пыракан чирлĕ çынсене
путевкăсемпе çеç йышăнаççĕ.
ДИРЕКЦИ.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха — 7 т. 50 пус, 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 141. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.

X